ХЫПАР

1925 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнчен пуçласа 1966 çулхи çу уйăхĕччен тĕрлĕ ятпа тухнă, «Хыпар» хаçат пуçарăвĕпе 1996 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕнчен тепĕр хут тухма пуçланă

# Çамрăксен хаçачĕ

Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премийĕн лауреачĕ

2014, кăрлач, 24, эрне кун, 3 /5992/ №

Хакĕ ирĕклĕ

WWW.hypar.ru
molgazeta@rambler.ru

эрнелĕх телепрограмма

16+


## Хаклă туссем!

**Сире Раççей студенчĕсен кунĕ ячĕпе чунран саламлатăп!**

Студент çулĕсем – пурнăçăн çутă та илĕртӳллĕ тапхăрĕ, ку вăхăтра кирек камăн та вăй вĕресе тăрать, чунра çĕкленӳллĕ ĕмĕт-туйăм хуçаланать, пуçра пысăк плансем çуралаççĕ, тĕнчене улăштарса ăна ырăрах тăвас килет. Влаç органĕсен тĕллевĕ – сире хăвăрăн пархатарлă çав ĕмĕтĕрсене пурнăçлама, пултарулăхăра туллин уçма, çынлăх тата професси пахалăхĕсене тивĕçлĕн ăша хывма майсем туса парасси. Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн пуласлăхĕ шăпах сирĕнтен килет вĕт.

Чăваш Ен Правительстви професси вĕренĕвĕн тытăмне лайăхлатасси çине питĕ тимлĕ пăхать, асăннă тытăмăн тĕллевĕ вара тивĕçлĕ пĕлӳ парса, кирлĕ пек ăсталăхпа хăнăхăва алла илме пулăшса ĕç рынокĕнче ăнăçлă тупăшма пултаракан конкурентлă специалистсене вĕрентсе хатĕрлесси пулса тăрать.

Университетсемпе институтсен, техникумсемпе колледжсен тата училищĕсен пурлăхпа техника никĕсĕ çирĕпленет, педагогика кадрĕсен ăсталăхĕ тăтăшах ӳссе пырать. Професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисемпе республикăри малта пыракан предприятисем çыхăнса ĕçлесси вăйланать. Пĕлтĕр Шупашкарти транспорт тата строительство технологийĕсен техникумĕн никĕсĕ çинче хушма квалификацисен нумай функциллĕ центрне уçнă, планра – çавнашкал тата 6 центр уçасси, çав шутра «Раççей сечĕсем» акционерсен уçă обществи, «ТехноНиколь» корпораци, Г.А.Ильенко ячĕллĕ «Элара» НПК акционерсен уçă обществи пек компанисене хутшăнтарса.

Чăваш Енĕн талантлă çамрăкĕсем валли пултарулăхри ăнтăлушăн стипендисем, çамрăксен патшалăх премийĕсене çирĕплетнĕ. Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсене тытнă чухне физикăпа тата математикăпа лайăх результатсем кăтартнă, каярах инженер профессине суйласа илнĕ çамрăксем валли те хушма стипендисем палăртнă.

Эсир обществăра тивĕçлĕ вырăн йышăнасса, пултарулăхăрпа туллин усă курасса тата юратупа çунатланса çирĕп çемье чăмăртасса шанса тăратăп. Сире çирĕп сывлăх, иксĕлми шанăç, хастар кăмăл, мĕн пур ырă пуçарăва пурнăçлас ĕçре çитĕнӳсем, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**


*46 çулти арçын малтанхи арăмне иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕсемпе тытнă.*

⇨4 стр.

*Çĕрпӳри этнопаркри скульптурăсем кама чăрмантарнă?*

⇨5 стр.

*“Манăн ирĕк пулсан чăваш чĕлхине шкултан шăпăрпа шăлса кăларăттăм”, – тенĕ директор.*

⇨6 стр.

*Чăваш Енре – 76500 студент.*

⇨9 стр.

*Санта-Клауспа пĕр ялта пурăнакан Йокко Култима Шупашкара килĕштернĕ.*

⇨11 стр.




# Экзамен умĕн билет ыйтăвне тĕлĕкре курнă

Кăрлачăн 25-мĕшĕ – Раççейри студентсен кунĕ. Университет-институтра, колледж-техникумра вĕренекенсем паян-ыран тĕрлĕ уяв-мероприятие хутшăнаççĕ. Чылайăшĕн ку тĕле сесси те вĕçленет. Апла савăнмалли тепĕр сăлтав хушăнать. Татьянăсен вара пĕр харăс миçе уяв-ши? Ара, вĕсем кăрлачăн 25-мĕшĕнче хăйсен кунне те паллă тăваççĕ-çке. Сессирен сессиччен ши! шăхăрса пурăнсан та экзамен вăхăтĕнче студентăн куç хупман каç тăтăшах пулать. Пирĕн республикăри аслă шкулсенче ăс пухакансен хушшинче шĕкĕр “пиллĕкпе” вĕренекенсем те пур. Вĕсенчен пĕри – И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУн историпе филологи факультечĕн 5-мĕш курс студентки Ирина Николаева. Унăн зачет кĕнекинче пĕр “виççĕ” те, пĕр “тăваттă” та çук. Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендине кăçалхипе виççĕмĕш хут тивĕçнĕ хĕре “Çамрăксен хаçачĕн” тĕпелне йыхравларăмăр.

9

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви

"Хыпар" Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

Директор-тĕп редактор
А.П.ЛЕОНТЬЕВ

● Редакци канашĕ:
М.М.АРЛАНОВ – «Хыпар» Издательство çурчĕн тĕп редакторĕн çумĕ
Н.Н.КАЗАКОВ – ЧР Композиторсен союзĕн ертÿçи
А.П.ЛЕОНТЬЕВ – «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ

● Пирĕн адрес: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Çамрăксен хаçачĕ"
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пусне.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07.
Электрон почти:
molgazeta@rambler.ru
hypar@chtts.ru
pop408@rambler.ru
Сайт:
WWW.hypar.ru

● Телефонсем:
Редактор
28-83-61
Политика, право, информаци пайĕ
28-84-05
Экономика, социаллă ыйтусен, ял пурнăçĕн пайĕ
62-30-07
Çамрăксен организацийĕсен, çарпа патриотизм, спорт пайĕ
62-30-07
Культура, кăмăл-сипет, çырусемпе массăллă ĕçсен пайĕ
28-83-61

Редактор
Д.А.МОИСЕЕВ

● Издательство директорĕ
В.А.ЧЕМЕРЕВ
Тел. 56-00-23

● Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ ФС77-54015 номерпе регистрациленĕ.
● Хаçат индексĕ - 54804.

● Ал çырусене рецензилемеççĕ тата каялла памаççĕ

● Дежурнăй редактор
Е.В.ТРОФИМОВА

● Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.

Тираж 8025.
Заказ 217.

Пичете графикпа 18 сехет те 30 минутра алă пусмалла.
18 сехетре алă пуснă.

# Чăваш Ен пики медальсемшĕн тупăшĕ

Йĕлтĕр спорчĕн Пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ Сочири Олимп вăййисене хутшăнма ирĕк паракан лицензие спортсменсене панă. Фристайл енĕпе ăна 22-ĕн тивĕçнĕ. Çак йышра Чăваш Ен пики Елена Муратова та пур.



Вăл 1986 çулта Мурманск облаçĕнчи Кировск хулинче çуралнă. Унăн пĕрремĕш тренерĕ – ашшĕ Игорь Муратов. Чылай çул Елена Мускав командишĕн ăмăртнă, 2012 çултанпа Чăваш Ен чысне хÿтĕлет. Вăл тĕрлĕ шайри ăмăртура чылай çитĕнÿ тунă. Нарăсăн 7-23-мĕшĕсенче иртекен Олимп вăййисенче сăрт-ту йĕлтĕрçисем тăватă дисциплинăра тупăшĕç. Елена Муратова çитĕнÿ тăвасса шанатпăр.

# 11 тренера - йыхрав хучĕ

Чăваш Енри 11 спорт судйине хĕллехи Олимпиадăна ĕçлеме чĕннĕ.

Ĕнер çеç Сочине Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 2-мĕш спорт шкулĕн тренерĕ, биатлон енĕпе спорт мастерĕ Денис Салдимиров тухса кайнă. Паралимпиадăра Андрей Михайлов, Вячеслав Ильин, Юрий Плотников, Владислав Антонов, Олег Булыгин, Валерий Васильев, Сергей Овсянников, Константин Мясоедов, Василий Никитин, Владимир Сидягин спортсменсен ăмăртăвне хаклĕç.

# Студентсем - Сочие

Кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕнче тата 31-мĕшĕнче Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн 94 студенчĕ Сочие апатлану объекчĕсене ĕçлеме кайĕ. Вĕсен çирĕп тĕрĕслев витĕр тухма тивнĕ. Унта производство практикине вăхăтра тухнă, мĕн пур экзамена лайăх тытнă, яваплăха туякан çамрăксене суйланă.

Студентсем Сочире нарăс-пуш уйăхĕсенче поварта, официантра, сутуçăра ĕçлĕç. Вĕсем Олимп паркĕнчи апатланмăшсене çÿрекен спортсменсемпе хăнасене пăхĕç. Çул çÿревшĕн тата унта пурăннăшăн вĕсене «Фьюжен-Менеджмент» компани тÿлет.

# Мулкач хуçи

Кăрлач уйăхĕн 18-мĕшĕнче К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче Раççей тата Чăваш пичечĕн кунĕсене халалланă уяв иртнĕ. Унта массăллă информаци хатĕрĕсене тата калем ăстисене чысланă. Олимп вăййисен талисманне – мулкача – ÿкерекене Сильвия Петровăна «Чăваш мулкачĕ» номинацире Дипломпа хавхалантарнă. Сăмах май, Сильвия Олимп вăййисене хăй те кайса курĕ.

ЭПĔ ТЕ КАЛАМ-ХА

# "Пÿремечпе" ярăнатпăр - хăлхасем хĕп-хĕрлĕ

**Ачалăха аса илетĕп те – тĕлĕнетĕп. 10-20 çул каяллах пурнăç урăхлаччĕ. Хĕл çитессе чăтăмсăррăн кĕтеттĕмĕр, юр çусанах çырма-çатрари тăвайккинчен çунашкапа, йĕлтĕрпе ярăнаттăмăр. Чи çÿллĕ вырăна хăпараттăмăр та кула-кулах шуса анаттăмăр. Юр ăшне чăмсан та ыратнине туймастăмăр, киле сĕм çĕрле çеç таврăнаттăмăр. Сăрт тăррине хăпарса татах та татах ярăнас килетчĕ. Маларах кĕсье телефонĕ, унтан компьютерпа Интернет сарăлнă май ял урамĕнче ача-пăча сасси шăпланчĕ. Канмалли кунсене яла каятăп та урамра кăнтăр кунĕнче те, каçхине те çын çукки сехĕрлентерет. Пирĕн урамра çамрăксем чылайăн пурăнаççĕ. Анчах ăçта кайса кĕнĕ-ха вĕсем? Паллă ĕнтĕ: кашни тенĕ пекех вăхăта компьютер умĕнче ирттерет. Çырма-çатрара халĕ çунашка-йĕлтĕр йĕрĕ те çук.**

Паллах, вăхăт пĕр вырăнта тăмасть. Çын пурнăçне çăмăллатакан çĕнĕ технологисем аталанаççĕ, самана улшăнать. Акă ял хуçалăхĕнче нумай-нумай çул усă курнă çунашкасем те çухалма пуçларĕç. Эпир вĕсемпе ярăнаттăмăр. Хăшĕпĕри машина камерине илсе тухса мăнаçланатчĕ. Юлашки вăхăтра тюбинг /машинăн ПВХ-материалран çĕленĕ камери/ анлă сарăлчĕ. Ачасем çак хатĕре тĕрлĕ тĕслĕ те çăмăл пулнăран питĕ кăмăллаççĕ. Ăсталакансемпе сутакансем вăл сиенсĕррине ĕнентереççĕ пулин те, ЧР Сывлăх сыхлав министерстви пĕлтернĕ тăрăх, вĕсемпе ярăнса ачасемпе çамрăксем аманаççĕ. Кунашкал тĕслĕх пĕлтерхинчен сахалрах пулин те, савăнмалли сăлтав çукрах. Пĕлтĕр Çĕнĕ çул хыççăнхи канмалли кунсенче çав хатĕрпе ярăнса 242 çын сусăрланнăран хулари тăвайккисене ĕçлеме чарчĕç. Шупашкари кÿлмекре виçĕ тăвайккине хупрĕç. Кăçал аманнисен йышĕ сахалли çанталăк Кăшарниченех ăшă тăнипе çыхăннă-тăр. Çак кунсенче ав юр хытнăран тюбингпа ярăнакан йышланчĕ. Ку хатĕре халăхра «пÿремеч» теççĕ. Унăн икĕ енче алăпа тытмалли «руль» пур. Çăмăл пулнăран «пÿремеч» час-часах çавранса ÿкет, умра епле те пулин чăрмав пулсан тÿрех чаранăймасть. Чылай чухне ярăнаканăн урипе чарма тивет, анчах çавранса пынă чухне кĕлеткен кирек хăш пайĕ те мала куçма пултарать. Çирĕп тытăнмасан «пÿремечрен» тухса ÿкес хăрушлăх сиксе тухать. Кун пек чухне вара аманасси те инçе мар. Чылайăшĕн маййĕ, çурăм шăмми, аяк пĕрчи хуçăлать. Çапах, травматологсем пĕлтернĕ тăрăх, аманнисен йышĕнче çурăм шăммине хуçакан ытларах. Чи хăрушши – çын хăй аманнине нумай вăхăт пĕлмесĕрех пурăнма пултарать, çавăнпах медиксем çурăм ыратнине туйсанах тухтăр патне чупма сĕнеççĕ.

Тăвайккинчен питĕ ярăнас килсен хăрушсăрлăх йĕркине тĕплĕ пăхăнмалла. Тюбинг çине пукан çине ларнă пек урана чĕр куççинчен хуçлатса вырнаçмалла. Вырта ярăнма юрамасть. «Пÿремеч» шуса аннă вăхăтра ун çине сиксе ларнăран, пĕр-пĕрин хыççăн «паравус» пек ярăннăран пĕлтĕр аманса больницăсене çакланакан йышлă пулнă. Умра шуса анакан пуррине курсан та тăхтамалла. Çула пĕлмесен ăна малтан пăхса тухăр, шăтăк-путăка асăрхăр. Йывăççемпе тĕмсем пур çĕрте ан ярăнăр. «Сыхланакана турă сыхлать», – тесе ваттисем ахальтен каламан. Канмалли кунсем асра савăнăçлă самантсем çеç хăварччăр тесен асăрханни пăсмĕ! Интернетри нумай сайтра «пÿремеч» çинчен тĕрлĕ информаци вырнаçтарнă. Раççейри нумай хулара унпа ярăнса аманакансен шучĕ чакмасть. Тепĕр чухне тюбинг çине ачипе пĕрле ларнă ашшĕ-амăшĕ те аманаççĕ. Çавăнпа ĕлĕкхи çунашкасене манар мар пуль. Ĕлĕкхи ăстасем ăна пĕлсе авнă.

Алена АЛТУХОВА.




# 2 эрне çеç юлчĕ

Шут палати Сочири Олимпиада валли уйăрнă укçана мĕнле расхутланине тĕрĕсленĕ. Йĕркене пăснă самант тĕл пулман. Правительство вице-премьерĕ Дмитрий Козак пĕлтернĕ тăрăх – Олимп объекчĕсене çĕклеме 214 миллиард тенкĕ уйăрнă, унпа кирлĕ пек усă курнă. Патшалăх бюджечĕ 99 миллиард тенкĕ расхутланă, ытти – харпăр инвесторсен укçи.

* * *

Тĕп хулари 5-мĕш музыка шкулĕнчи «Соловушки» ансамбль Сочири Олимп вăййисем хупăннă чухнехи концерта хутшăнĕ. Çамрăк артистсем Раççейĕн пĕрлештернĕ ачапăча хорĕн йышне кĕнĕ. Пин çынран тăракан хора çĕр-шывăн мĕн пур регионĕнче пурăнакан ачасенчен йĕркеленĕ. Ансамбльте юрлакансем Санкт-Петербургра ирттернĕ репетицие пулнă.

* * *

Олимп çулăмĕ Волгоградра пулнă. Унта икĕ рекорд лартнă. Пĕрремĕшĕнчен – унăн маршручĕ историре чи вăрăмми пек асра юлĕ /46 километр/, иккĕмĕшĕнчен – çулăма пирвайхи хут çĕр айĕнчи метрона илсе кĕнĕ.

* * *

Чылайăшне Олимпиада вăхăтĕнче Сочире хваттер тара илнĕшĕн мĕн чухлĕ тăкакланма тивесси кăсăклантарать. Экспертсем каланă тăрăх – паян унта пĕр талăкшăн 1, 2 тата 3 пÿлĕмлĕ хваттерсемшĕн 3-20 пин тенкĕ таран кăларса хумалла. Риэлторсем пĕлтернĕ тăрăх – хаксем хулан тĕрлĕ кĕтесĕнче расна. Олимп объекчĕсем çывăхĕнчи суртсемшĕн, паллах, ытларах ыйтаççĕ.

* * *

Пĕлтĕрхи авăн уйăхĕнчех «Сочи 20-14 спорт лонгмобĕ» акци старт илнĕ. Кăрлачăн 15-мĕшĕнче çак пуçарăва Çĕмĕрлери 8-мĕш гимназире вĕренекенсем, учительсемпе ашшĕ-амăшĕ хутшăннă. Акци йĕркипе килĕшÿллĕн 14 сехетре 20 минутлăх чупу старт илнĕ. Палăртнă çухрăма пĕрисем çуран, теприсем йĕлтĕрпе, виççĕмĕшĕсем конькипе парăнтарнă. Акци нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕччен тăсăлать. Хальлĕхе унта çĕр-шывăн 75 регионĕ хутшăннă. Пĕтĕмпе 280 пин ытла ача, вĕрентекен тата ашшĕ-амăшĕ старта тухнă. Чупу йĕркелÿçисен 20 минутра парăнтарнă çухрăма шутламалла, унта миçе çын чупнине шута илмелле. Ку информаци тата шкул е ушкăн логотипне longmob.1september.ru сайта вырнаçтармалла. Акци вĕçленсен пуçарăва хутшăннисен эмблемисене Сочири спорт мухтавĕн музейне парĕç.

Любовь ПЕТРОВА хатĕрленĕ.

# Уявра калем ăстисене чысларĕç

**Иртнĕ шăмат кун Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче Раççей тата Чăваш пичечĕн кунĕсене халалланă мероприяти иртрĕ. Журналистсемпе полиграфистсене, пичет ĕçĕн ветеранĕсене професси уявĕпе саламлама республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та килсе çитрĕ.**

**Театра пухăннисем малтан массăллă информаци хатĕрĕсенче, издательствăсемпе телекоммуникаци предприятийĕсенче вăй хуракансен ĕç-хĕлĕпе фойери куравра паллашрĕç.**



ЧР информаци политикин министрĕ Валентина Андреева пĕлтĕрхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетрĕ, вăл МИХ ĕçченĕсемшĕн ăнăçлă пулнине палăртрĕ. Ку – раштаван 17-мĕшĕнче «Тăван радио» эфира тухни те, республика тата район-хула хаçачĕсем «Прессăн ылтăн фончĕ» палла тивĕçни те, «Хыпар» Издательство çурчĕ никĕсĕ çинче медиахолдинг йĕркеленни те...

Уява пухăннисене Михаил Игнатьев саламларĕ, чи пултаруллисене патшалăх наградисем парса чысларĕ. Етĕрне районĕнчи «Ĕç ялавĕ» хаçатăн реклама менеджерне Фаина Михайловăна Чăваш Республикин Хисеп хучĕпе наградăларĕç. «Грани» Издательство çурчĕн информаци пайĕн редакторне Алексей Мигунова, Чăваш наци телерадиокомпанийĕн директорĕн çумне Юлия Стройковăна, «Чăваш Ен» телерадиокомпанин информаци программисен служби пуçлăхĕн çумне Лидия Петрейкинăна «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят пачĕç. Чăваш наци телекуравĕн информаци программисен редакцийĕн пай ертÿçине Елена Гальперинăна тата пичет ветеранне Петр Кольцова Михаил Игнатьев Тав çырăвĕпе тата алла çыхмалли сехетпе чысларĕ.

ЧР Журналистсен союзĕн председателĕ Валерий Комиссаров калем ăстисен сумлă премин лауреачĕсене саламларĕ. Л.Ильин ячĕллĕ премин лауреачĕсен йышĕнче «Хыпар» Издательство çурчĕн экономика пайĕн тишкерÿçи Юрий Михайлов та пур. Ĕçтешĕмĕрсен хушшинче чыса тивĕçнисем татах та пулчĕç. Лидия Шумова калăплавçăпа Альбина Волкова оператор РФ Çыхăну тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп хутне илчĕç. «Çамрăксен хаçачĕн» редакторне Дмитрий Моисеева ЧР Патшалăх Канашĕн Тав çырăвĕпе чысларĕç.

ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви пултаруллă журналистсене тата 2013 çулта палăрнă МИХсене Дипломпа хавхалантарчĕ: пичет ветеранне – СССР Журналистсен союзĕн членне, «Каçал ен» тата «Хыпар» хаçатсен общество корреспонденчĕпе Ревокат Моисеева – «Халăх корреспонденчĕ», Пăрачкав районĕнчи «Порецкие вести» хаçата – «Пысăк тиражлă хаçат», Çĕмĕрле районĕнчи «Вперед» хаçата – «Электрон çырăнтару», Çĕнĕ Шупашкарти «Грани» хаçата – «Социаллă карта», «Советская Чувашия» хаçата «Аталану стратегийĕ – çул-йĕр» номинацисенче палăртрĕç.

Мероприяти концертпа вĕçленчĕ. Зала пухăннисен кăмăлне республикăри пултарулăх коллективĕсем хăйсен юрри-ташшипе çĕклерĕç.

**Любовь ПЕТРОВА.**

**Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕсем.**



● **Лидия Шумовăна – РФ Çыхăну тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп хучĕ.**



● **Дмитрий Моисеева – ЧР Патшалăх Канашĕн Тав çырăвĕ.**

**КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ**

# Пуçланчĕ...

Кăрлачăн 17-мĕшĕнче Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче Культура çулталăкне уçнă май савăнăçлă мероприяти иртрĕ. Уява ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, ЧР Министрсен Кабинечĕн представителĕсемпе ытти хăна çитрĕç. ЧР Пуçлăхĕ Михаил Васильевич сăмах илчĕ.

– Культура кашни тытăмра ĕçлекен çыннах пырса тивет, вăл патшалăх пулăшăвĕсĕр аталанаймасть, çавăнпа 2014 çула Культура çулталăкĕ тесе палăртни – питĕ паха пулăм. Искусствăн паллă çыннисем çумне çамрăк талантсем хушăнаççĕ. XXI ĕмĕрте çемьери хутшăну культурин ыйтăвĕсем питĕ çивĕч. Шăпах çавăнтан пирĕн çамрăк ăру еплерех пуласси килет, – терĕ вăл.

Михаил Игнатьев культура тытăмĕнче палăрнисене патшалăх наградисемпе чысларĕ. Айдар Хисамутдинов – «ЧР халăх артисчĕ», ЧР культура министрĕн пĕрремĕш çумĕ Альбина Алексеева, Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищин преподавателĕ Ирина Никитина, Валерьян Толстов-Атнарский ячĕллĕ «Çын тата çут çанталăк» тавра пĕлÿ халăх музейĕн директорĕ Зоя Спиридонова, Красноармейски районĕнчи «Заволжски» клуб директорĕ Михаил Дмитриев «ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ятсене тивĕçрĕç. Çамрăксем ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнине ĕнентерекен свидетельствăна алла илчĕç. Çавăн пекех ЧР Пуçлăхĕ Чăваш Республикинчи Культура çулталăкĕн эмблемин конкурсĕнче çĕнтернĕ ÿнерçе – Красноармейски ял тăрăхĕнчи Александр Казакова – саламларĕ. Уява республикăри чи пултаруллă ушкăнсен концерчĕ илем кÿчĕ.

**Алена АЛТУХОВА.**

**РЕСПУБЛИКĂРА, ÇĔР-ШЫВРА, ЧИКĔ ЛЕШ ЕНЧЕ**

## Маттур биатлонистсем

Ижевск хулинче биатлон енĕпе иртнĕ федерацин Атăлçи тăрăхĕн чемпионачĕ вĕçленнĕ. Пирĕн спортсменсем унтан медальсемпе таврăннă.



Вячеслав Акимов спринтер чупура ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. Массăллă стартра вара вăл «кĕмĕле» тивĕçнĕ. Татьяна Семенова чемпионатра кĕмĕл икĕ медаль çĕнсе илнĕ: спринтерта тата массăллă стартра. Çавăн пекех ентешĕмĕрсем пухмача икĕ «бронзăпа» пуянлатнă. Анастасия Михайлова – массăллă стартра, Станислав Григорьев юниорсен ушкăнĕнчи спринтер чупăвĕнче виççĕмĕш вырăна тухнă.

## Çамрăк амăшĕсем валли

Чăваш Республики Раççей Правительстви сăнав irттерме йышăннă программăна кĕнĕ. Унпа килĕшÿллĕн 23 çул тултарман амăшĕсем аслă пĕлĕве тÿлевсĕрех илме пултараççĕ.

Пĕтĕмпе сăнава 50 регионти аслă 51 шкул хутшăнать. Пирĕн республикăра çакнашкал вĕренÿ И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ çумĕнче пулĕ. ЧР Сывлăх сыхлав министерстви пĕлтернĕ тăрăх – кусăн майпа вĕренме кĕмешкĕн – 15, кусăн мар майпа ăс пухма 6 çамрăк амăшĕ ППЭне хатĕрленет. Сăнав тĕллевĕ – çамрăк амăшĕсене пахалăхлă аслă пĕлÿ илме пулăшасси. Халĕ 23 çул тултарманскерсен аслă шкул çумĕнчи хатĕрленÿ курсĕсене çÿреме ирĕк пур. Ку вĕсене университет-института шкултан вĕренсе тухнă яш-хĕрпе тан кĕмелли экзаменсене тытма май парать. Çамрăк амăшĕсем федераци бюджетĕнчен уйăрнă укçапа ăс пухĕç. Сăнава хутшăнас текен çамрăк хĕрарăмсен /пĕр е ытларах ачаллисен/ çаксене пăхăнмалла: 23 çултан аслăрах пулмалла мар, РФ гражданстви, вăтам шкул пĕтернине çирĕплетекен аттестат кирлĕ. Çавăн пекех вĕсен аслă пĕлÿ дипломĕ пулмалла мар.

## Ют тăрăха – тÿлевсĕр вĕренме

Аслă пĕлÿ илме ĕмĕтленекенсем валли савăнăçлă тепĕр хыпар пур. Ку чикĕ леш енчи вĕренĕве пырса тивет.

Çитес вăхăтра, тен, чикĕ леш енчи аслă шкулта ăс пухакан Раççей студенчĕсене патшалăх укçан пулăшĕ. Кун пирки нумаях пулмасть РФ вĕренÿ министрĕн çумĕ Александр Климов пĕлтернĕ. Кирлĕ документсене хатĕрлеççĕ çеç-ха, анчах черете халех çырăнмалла. Александр Климов каланă тăрăх – çак программăна хутшăнакансене çулталăкне 1,5 миллион тенкĕпе пулăшĕç. Ку магистратурăна, аспирантурăна тата ординатурăна пырса тивет. Анчах аслă шкултан вĕренсе тухсан программăна хутшăнакансен Раççее таврăнмалла, виçĕ çул ĕçлемелле. Патшалăх çак ĕçе мĕн тĕллевпе пуçăнасшăн-ха? Раççейре квалификациллĕ медиксем, инженерсем, ертÿçĕсем çитмеççĕ. Студентсем каярахпа, Раççее таврăнсан, патшалăх вĕренме уйăрнă укçана саплаштарĕç /çак тĕллевпе шалуран укçа тытса юлмĕç/. Чикĕ леш енче аслă пĕлÿ илнĕ çамрăксен вара Тăван çĕр-шыва таврăнас кăмăл пулатех. Ара, вĕсем валли лайăх условиллĕ ĕç вырăнĕ хатĕр пулĕ-çке-ха. Енчен те программăна хутшăннă яш-хĕр Раççее таврăнмарĕ тĕк вĕсен штраф тÿлеме тивĕ: патшалăх тăкакланă укçаран виçĕ хут ытларах. Шел те, чикĕ леш енче тÿлевсĕр вĕренме ĕмĕтленекенсем пурте унта каймĕç. Программăна çулталăкра 1000 çамрăк çеç хутшăнайĕ.

## “Хĕллехи вăхăт” таврăнĕ-ши?

«Хĕллехи вăхăта» каялла таврĕç-и? Çак ыйту чылайăшне канăçсăрлантарать. Патшалăх Думине ку тĕлĕшпе саккун проектне кĕртнĕ.

Саккун проекчĕпе килĕшÿллĕн – «хĕллехи вăхăта» каялла таврĕç. Çакăншăн тĕрлĕ фракцинчи 97 депутат сасăланă. Проектра вăхăтăн вунă зонине тума сĕннĕ. Ку Раççей çыннисен сывлăхне лайăх витĕм кÿрĕ: чирлессине, вилессине чакарма май парĕ. Патшалăх Думин спикерĕ Сергей Нарышкин каланă тăрăх – «хĕллехи вăхăта» таврас ыйтăва сÿтсе яваççĕ. Чылайăшĕ сехет йĕппине куçарасшăн пулнине шута илсе проекта тĕплĕн тишкерĕç.

**Ирина АЛЕКСЕЕВА хатĕрленĕ.**

# ЙĔРКЕ ХУРАЛĔ ПĔЛТЕРЕТ





## Бензопăчкăпа тав тунă

Раççей ФСИНĕн Чăваш Енри управленийĕн юсанмалли 9-мĕш колонийĕн унчченхи ĕçченĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе вĕçне тухнă, суда ярса панă. 24 çулти каччăна взятка илнĕшĕн явап тыттарасшăн.

Следстви версийĕ тăрăх – пĕлтĕрхи çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнче тата юпан 7-мĕшĕнче вăл колоние ларакансене карас телефонĕ кĕртсе памашкăн сĕтев илнĕ. Пĕрремĕш хутĕнче ăна çакăншăн 3 пин тенкĕпе тав тунă пулсан иккĕмĕшĕнче бензопăчкă тыттарнă. Колони ĕçченне юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче шăпах телефона илсе кĕме тăнă чухне тытса чарнă.

## Ытти халăха кураймасăр…

Шупашкарта пурăнакан, вăхăтлăха ниçта та ĕçлемен 24 çулти каччă тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе пăхса тухнă, суда ярса панă. Мĕн хăтланнă-ха вăл?

Следстви версийĕ çапларах: 2012 тата 2013 çулсенче çак каччă халăхсен туслăхне аркатас тĕллевпе Интернетри социаллă сайтри хăйĕн страницине хăш-пĕр халăха мĕскĕнлетекен икĕ видеофайл тата сăн ÿкерчĕксем вырнаçтарнă. Ĕç-пуçа Калинин районĕн сучĕ çак кунсенчех пăхса тухĕ.

## Малтанхи арăмне – вилмеллех

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тури Çĕрпÿкассинче пурăнакан 46 çулти арçын тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарма тивнĕ. Вăл кăрлач уйăхĕн 17-мĕшĕнче çĕрле хăйĕн малтанхи арăмне вилмеллех хĕненĕ.

Малтанлăха пĕлтернĕ тăрăх – çаксене çÿлерех асăннă каç хăйĕн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ патне пынă. Пÿртре 54-ри кил хуçипе хăйĕн арăмне çаппа-çарамас курсан урса кайнă. Унтах иккĕмĕш сыпăкри тепĕр пиччĕшĕ те, 48 çулти, пулнă. Арçын виççĕшне те тискеррĕн хĕненĕ. Кил хуçи тухса тарма ĕлкĕрнĕ-ха, малтанхи арăмĕн чĕри вара сурансене чăтаймасăр тапма чарăннă. Тепĕр тăванне те самаях лекнĕ – вăл халĕ реанимаци уйрăмĕнче выртать.

Этем ретĕнчен тухнă арçынна тытса чарнă, вăхăтлăха ирĕксĕр хăварнă, лару-тăрăва малалла тишкереççĕ.

## Хуралçăсене ĕçлеттерĕç

Шупашкарти Ленин районĕн сучĕ хулари каçхи пĕр хупахра хуралçăра ĕçленĕ икĕ арçын тĕлĕшпе приговор вуланă. Çынна хĕненĕскерсене 300 тата 360 сехет ĕçлеттерме йышăннă.

Уголовлă ĕç материалĕсем тăрăх – пĕлтĕрхи пуш уйăхĕн 31-мĕшĕнче хупаха пынă арçын такси чĕнсе памашкăн ыйтнă. Анчах çакă икĕ хуралçа темшĕн килĕшмен – вĕсем канма пынăскере урама тапа-тапа тĕксе кăларнă, ураран ÿкерсе пĕр хĕрхенмесĕр хĕненĕ.

## Юн тухмалăхах çыртнăшăн

Шупашкарти Мускав районĕн сучĕ Шупашкар районĕнчи Ишлей салинче пурăнакан 20-ри каччăна çирĕп режимлă колоние çулталăк çуррăлăха ăсатма йышăннă.

Следстви версийĕ тăрăх – пĕлтĕрхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче çĕрле ăна тĕп хулари хупахсенчен пĕринче унта пынисемпе çапăçнăшăн тытса чарнă. Полицейскисем ăç машинипе йĕрке хуралне илсе кайнă чухне çакскер самаях хăлаçланнă, алăка уçса сикме те тăнă. Хăйне чарнăшăн тарăхнă каччă пакунлисенчен пĕрне сулахай аллинчен юн тухмалăхах çыртнă. Çапла хăтланнăшăн вăл килне часах таврăнаймĕ.

## Сакăр çуллăха

Çĕмĕрле районĕн сучĕ çав тăрăхрах пурăнакан 21-ри каччă айăплине çирĕплетнĕ, çынна вилмеллех хур кăтартнăшăн ăна çирĕп режимлă колоние 8 çуллăха ăсатма йышăннă.

Уголовлă ĕç материалĕсем тăрăх – пĕлтĕрхи çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче каç кÿлĕм вăл хăйĕн Çĕмĕрлери пĕлĕшĕ патĕнче хăнара пулнă, унта 33 çулти арçынна харкашнă. Анчах ĕç-пуç сăмахпа перкелешнипех вĕçленмен, пуçтах алли-урипе те хăлаçланнă: пуçне, кĕлеткин ытти пайне суранлатнă. Ахаль те хур курнăскере юлашкинчен пуçĕнчен электричество кăмакипе тÿпкенĕ. Арçын чĕри çавăнтах тапма чарăннă. Каччă ниçта кайса кĕреймен – вилене урама сĕтĕрсе тухнă. Унта ăна йĕрке хуралçисем асăрхаса тытса чарнă.

## Пристава тапăннă

Шупашкарта пурăнакан 41-ри арçын тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе судра пăхса тухнă. Ăна çулталăк çуррăлăха условлă майпа айăплама йышăннă.

Официаллă верси çапларах: пĕлтĕрхи çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче Ленин районĕн суд приставĕсен пай пуçлăхĕ çÿлерех асăннă арçын патне хваттере пынă. Суд кил хуçинчен 940 пин тенкĕ шыраса илсе банка пама йышăннă. Парăмлăскер харпăрлăхри япаласене туртса илме пынă суд приставне курсанах тарăхса кайнă – ăна тĕксе янă, майĕнчен çапнă, усал сăмахсемпе ятланă. Сĕтел çинче ларакан сехетпе сулса çапма тăрсан ăна тытса чарнă.

Никита АНДРЕЕВ хатĕрленĕ.

ÇУЛ-ЙĔР ÇИНЧЕ

# Инкек алли инке мар…

**Çапла каланă ĕлĕкрен. Вăл никама та хĕрхенмест. Инкек хăçан, ăçта тата кам çумне çулăхасси не пĕлме çук. Эппин, пушшех те пирĕнтен кашнинех кирек ăçта та тимлĕх пирки манмалла мар пек, анчах çакна яланах уямастпăр çав. Çул çинче пулакан аварисем пирки сăмах хускатасшăн эпĕ.**



• Çĕрпÿ районĕнче пулнă тискер авари.

Çулталăк пуçланнă-пуçланман вĕсен хисепĕ темиçе теçеткерен те иртрĕ. Кăрлачăн 1-мĕшĕ çитни 20 минут кăна – ÇСХПИ ĕçченĕсем авари пулнă вырăна васканă. Пĕрисем – уява çывăх çыннисемпе кĕтсе илнĕ, теприсем канупа культура учрежденийĕсенче пулнă, виççĕмĕшĕсем сĕм çĕрле пулнине пăхмасăрах çула тухнă. 22-ри пĕр çамрăк М-7 автоçулпа хăйĕн «тимĕр урхамахĕпе» вĕçтернĕ. «Лада Гранта» рульне тытса пыраканскер Çĕрпÿ районĕнчи Тупнер çывăхĕнче пĕр çынна таптанă. Çĕнĕ Шупашкарта пурăннăскер вилмеллех суранланнă. Шел, унăн пурнăçĕ ытла та ир, 31 çултах, татăлнă.

Тискер тепĕр пулăм. Кăрлачăн 17-мĕшĕнче ирхине – «Çĕрпÿ-Чемпĕр» автоçул çинче хăрушă авари. Япăх çанталăка пула «ВАЗ-2110» машинăна хуçи пăхăнтарайман – транспорт хирĕç килекен çул çине тухнă, иномаркăпа çапăннă. «Вуннăмĕшĕн» рулĕ умĕнчине, кайри ларкăч çине ларнăскерне 20-ри хĕре тата иномаркăпа çула тухнă икĕ пассажира медицина учрежденийĕсене ăсатнă. Анчах пĕрремĕшĕнче пулнă 41-ри арçынпа унăн пĕр çул кĕçĕнрех мăшăрĕ тата вĕсен 20-ри хĕрĕ пăтăрмах хыççăн çав вырăнтах куç хупнă.

Пĕр кун маларах Шупашкарта ирхи тăватă сехет иртсен пĕр çамрăк руль умне ларнă. Эрех ĕçнĕскер çак вăхăтра ăçта кайма тухнă-ши? 21-ри каччă та руле йĕркеллĕ пăраймасăр электричество юпине пырса тăрăннă. Суранланнăскер васкавлă медпулăшу больницине çитнĕ.

Каçхине çул урлă каçакана асăрхама хĕн, уйрăмах вăл ятарлă вырăнтан мар, урăх çĕртен утать пулсан. 26-ри яш тата каçхи ултă сехетре ăçта хыпаланнă-ши? «Зебра» тăрăх каçнă пулсан ăна Шупашкартан Çĕрпÿ еннелле çул тытнă «Шевроле Нива» хуçи асăрхатчех ĕнтĕ. Шел, урапа айне лекнĕскер вилмеллех аманнă.

Кăрлач уйăхĕнче пулнă тепĕр тĕслĕх. Куславкка районĕнчи Кивĕ Тĕрлемесре кун çутинчех 12-ри хĕр ача çине иномарка кĕрса кайнă. 45-ри водитель суранланнăскере килне леçнĕ те «çухалнă». Шкул ачине больницăна ăсатма тивнĕ.

Кашни тĕслĕх чуна çÿçентерет. Аслисем çеç мар, кĕçĕн çултисем те çул çинчи синкерте хур кураççĕ. Çуран çÿрекенсем кăна мар, руль умĕнчисем те аманаççĕ, çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлаççĕ. Унашкал тĕслĕхсем пĕлтĕр те, унччен те пулнă. 2013 çулхи статистикăпа çак эрнере пулнă пресс-конференцире ЧР ШĔМĕн ÇСХПИ управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Романов паллаштарчĕ. Пĕлтĕр çул-йĕр çинче 2046 пăтăрмах пулнă. Ку хисеп, виçĕм çулхипе танлаштарсан, 0,7% чухлĕ сахалрах. Уйрăмах аварие лексе аманнисен /2606 çын/ тата куç хупнисен /253/ йышĕ пĕчĕкленни савăнтарать. Анчах çуран çÿрекенсен айăпĕпе /9,1% таран/ тата руль умĕнчисем правилăна пăхăнман пирки /1,1%/ пулнă аварисен хисепĕ ÿснĕ. Владимир Геннадьевич пĕлтернĕ тăрăх – халĕ инкек хыççăн больницăна лекнĕ çын вăтăр талăкчен куç хупсан ăна аварие пула вилнисен шутне кĕртеççĕ. Унччен çав тапхăр пĕр эрне çеç шутланнă. Руль умне ÿсĕрле ларса çула тухни те чылай чухне йĕрсĕр иртмест. «Çуттине» сыпнă водительсене пула пĕлтĕр 150 ытла инкекре 15 çын вилнĕ, 224-ăн аманнă.

Пĕлтĕр ÇСХПИ ĕçченĕсем пирĕн республикăра ачасемпе çыхăннă 248 аварие шута илнĕ, вĕсенче 260 ытла шăпăрлан аманнă тата тепĕр 7-шĕн пурнăçĕ татăлнă. Полици полковникĕ кĕçĕн çултисем машинăра ларса пынă чухне хур курнине палăртрĕ. Унашкал тĕслĕхсенче пилĕк шăпăрланăн кун-çулĕ татăлнă. Аслисем тĕпренчĕкĕсене ятарлă креслăна вырнаçтарманнипе аманаççĕ. Ачасене транспортпа илсе çÿремелли йĕркене пăхăнманшăн 3 пин тенкĕ штраф тÿлемелле. Çак висçе, унран та ытларах ывăлĕхĕрĕн пурнăçĕ хăш-пĕр ашшĕ-амăшне шухăшлаттармасть те-ши?

Тĕл пулура Владимир Романов ытти ыйтăва та уçăмлатрĕ – кăçал çул çинче вырнаçтармалли фототата видеохатĕрсем туянмашкăн 48 миллион тенкĕ уйăрнă. Нарăс уйăхĕнче çуран çÿрекенсем каçмалли вырăнсенче çĕнĕ хатĕрсем лартма пуçлаççĕ. Управлени пуçлăхĕ М-7 трасса çинче 2018 çулччен транспорта хирĕç килекен çул çине тухма чаракан карта вырнаçтарассине палăртрĕ. Унăн шухăшĕпе – çуран çÿрекенсем валли çул урлă каçма çĕр айĕпе е çийĕн ятарлă вырăнсем хатĕрлесси пирки ытларах халăхпа калаçмалла.

Инкек пулсан: «Питĕ шел», – тетпĕр. Анчах «шел» тенипе инкеке сирме те, пирĕнтен уйрăлнисене каялла тавăрма та май çук. Çакна асра тытса тимлĕрех пулма, çул çинче пĕр-пĕрне хисеплеме хăçан вĕренсе çитейĕпĕр-ши?

Елена ТРОФИМОВА.

НАРКОМАНИ

# Пулăшаççĕ…

Çулталăк пуçламăшĕнчи канмалли кунсенче кăна РФ наркослужбин Чăваш Енри управленийĕн ĕçченĕсем 25 преступлени тупса палăртнă. Вĕсенчен 13-шĕ – уйрăмах йывăррисем. Çав кунсенчех 11 çынна административлă майпа явап тыттарнă. Çĕнĕ çул уявĕсенче граждансем «шанăç телефонĕпе» пилĕк хутчен шăнкăравланă. Çакă наркополицейскисене преступленисене хăвăртрах уçса пама, айăплисене тупса палăртма пулăшнă.

Оперативлă шырав мероприятийĕсен вăхăтĕнче управлени ĕçченĕсем героин, гашиш, синтетика наркотикĕ туртса илсе тĕп тунă.

# Шухăшламалăх вăхăт пур

Шупашкарти Ленин районĕн сучĕ Юрий Егоров тĕлĕшпе приговор вуланă, вăл пысăк виçеллĕ наркохутăш сарнине çирĕплетнĕ. Суд Егорова çирĕп режимлă колоние 11 çуллăха ăсатма тата 50 пин тенкĕ штраф тÿлеттерме йышăннă.

Усал ĕçе арçын хăçан тата ăçта тунă-ха? Ĕç-пуç иртнĕ çулхи утă уйăхĕнче тĕп хулари парковкăсенчен пĕринче пулнă. Юрий унта пĕр гражданина 4 грамм наркотик сутнă. Арçыннăн хăйĕн пурнăçĕ пирки тĕплĕн шухăшламалăх йĕплĕ пралук леш енче чылай вăхăт пулĕ.

# Хăй те тутаннă

Пăрачкав салинче пурăннă Виктор Нагаев «шурă вилĕме» сарма хăтланнăскер хăй те унăн тыткăнне лекнĕ. Çĕмĕрле районĕн сучĕ арçын РФ УКн 228.1-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе килĕшÿллĕн айăплă тесе йышăннă.

Патшалăх айăплавçи 37-ри арçын саккуна хирĕçле ĕç тунине темиçе тĕслĕхпе çирĕплетнĕ. Нагаев пĕлтĕр çулла тăван районĕнчи пĕр тăрăхри хуçасăр кил пахчийĕсем тăрăх çÿренĕ. Унта мĕн тунă тетĕр-и? Мăкăнь пуçтарса килне илсе кайнă. Çав ÿсен-тăран уламĕнчен наркохутăш хатĕрленĕ. Арçын пĕр доза чухлĕ наркăмăша Çĕмĕрлери пĕлĕшне сутнă, юлнă мăкăнь уламне полици ĕçченĕсем килĕнче тупнă, туртса илнĕ.

Айăплă çын хăй те наркотик тутаннине медицина тĕрĕслевĕ çирĕплетнĕ. Тухтăр хушмасăрах наркăмăша ăша янăшăн Виктор Нагаев тĕлĕшпе пакунлисем административлă протокол та çырнă.

Преступлени тунине йышăнман Нагаевăн суд приговорĕпе килĕшÿллĕн 4 çул та 4 уйăх кирпĕч шутлама тивет.

Елена ВЛАДИМИРОВА.

# “Этнокультура паркĕ чăваш мифологине уçса парать”

**Кăçал – Культура çулталăкĕ. Çавна май Çĕрпӳсем хулана илемлетме тытăннă, этнокультура паркĕ тума шухăшланă. Тĕрĕссипе, парка пĕлтĕрхи кĕркунне уçнă, чӳк уйăхĕнче çак ятпа савăнăçлă мероприяти те иртнĕ. Анчах кăшт вăхăт иртсен ĕç чарăннă. Мĕн сăлтавпа-ха? Вячеслав Эткер /Андреев/ скульптор хатĕрленĕ этнокультура палăкĕсем вырăнти чиркӳ пачăшкине килĕшмен. Вăл чиркĕве кĕлĕ тума çӳрекенсене район администрацине çырупа янă. Вĕсем, православи тĕнне ĕненекенсем, этнопарка хула центрĕнчен аякарах куçарма ыйтнă. Çапла майпа паркри тĕп палăка склада вырнаçтарнă. Кун пирки хаçатăн иртнĕ номерĕсенчен пĕринче çырнăччĕ.**

## Тĕп палăкри шухăш

Çак пулăм тавра чылай калаçрĕç-тавлашрĕç. Интернетри пĕр форумра та кун пирки нумай çын хăйĕн шухăшне пĕлтернĕ. «Этнографи паркĕсем Европăра та, Азире те, Африкăра та анлă сарăлнă», – çырнă luc72. «Çак парка мĕншĕн православи чиркĕвĕпе юнашар тăваççĕ? Эпĕ турра ĕненнĕ май ку мана кӳрентерет», – тенĕ cantor. «Мĕн эсир çак скульптурăсене тапăннă? Çимĕкре масар çине кай-ха: православи тĕнĕ тĕлĕшĕнчен пăхас тăк вил тăпри çинче ĕççе-çини кӳренмелле мар-и?» – çийĕнчех хуравланă тепри. «Язычество – истори пайĕ, эппин, культура та. Иртнĕ çулсем çук халăхăн пуласлăхĕ те çук», – çырнă Konst.a. Тепри «Чăваш ялне» йĕркелеме, унта чăваш кухнине, музейне тума, наци йăли-йĕркипе килĕшӳллĕн уявсем ирттерме сĕннĕ. Форумри хивре тавлашăва вулană хыççăн Вячеслав Эткерпе тĕл пулса калаçрăм.

– Çĕрпӳ район администрацийĕ этнокультура паркĕ хута яма шухăшласан мана палăксем тума ыйтрĕ. Парк планĕ пирки нумай пуç ватрăм. Çапла майпа мифологи сăнарĕсене калăплама шухăшларăм. Тĕрлĕ халăхăн хăйĕн илемĕ пулмалла. Калăпăр, Греци мифологийĕнче Геракл пур. Мифологие эпĕ шухăшласа кăлараман. Кунта Никифор Наумовăн та, этнокультура енĕпе ĕçлекен ытти тавра пĕлӳçĕн те концепцийĕ пур, – калаçу пуçарчĕ Вячеслав Эткер скульптор.

Тӳрех палăртам: Вячеслав Анатольевич скульптурăна тăвиччен малтан ăна пластилинран хатĕрлет. Хăй каланă тăрăх – вăл çемçе çак материалпа ĕçлеме юратать. Пластилинран тунă скульптура килĕшмест тĕк, тархасшăн, – тепĕр майлă ав, çыпăçтар. Вячеслав Эткерĕн мастерскойĕнче йывăçран касса кăларнă тĕп скульптурăн пĕчĕк калăпăшлă кĕлетки пурччĕ. Скульптор шăпах çавăнпа усă курса паркра пулнă тĕп культурăпа паллаштарчĕ. Шел, Çĕрпӳри этнокультура паркне хамăн курма тӳр килмерĕ. Тĕрĕссипе, ĕлкĕреймерĕм тесен те юрать. Ара, вăл нумай та лараймарĕ-çке-ха. Пурăна киле унта çитсе те курăттăм ахăртнех. Телее, статьяна хатĕрленĕ вăхăтра Вячеслав шăнкăравласа савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ. Çак ыйтăва ЧР Культура министерствинче сӳтсе явнă хыççăн этнокультура паркне çав вырăнтах хăварма йышăннă, анчах унта пĕчĕк кăна улшăну пулĕ. Вячеслав Эткер тĕп скульптурăра «пытаннă» шухăшпа паллаштарчĕ:

– Тĕп палăкăн /вăл 5 метр çӳллĕш/ аялти пайĕ – пирĕн несĕлсем, эпир вĕсемпе çыхăннă. Унтан – тăвата ен. Ку – этеме чи кирлĕ тăвата пахалăх: юрату, телей, сывлăх, ырлăх. Вĕсене юпан тăвата енче пысăк сас паллисемпе касса кăларнă. Çаксене уявпа саламланă чухне сунаççĕ. Кунта хам шухăшласа кăларнă философи çук. Ку – халăх философийĕ. Кайран тăвата еннелле – управçăсен сăнарĕсем. Ун хыççăн – пĕлĕт. Пĕлĕтрен çӳлте – мифологин тĕп сăнарĕ. Унăн пĕр куçĕ – хурлăхлă, тепри – савăнăçлă. Кашни ӳнерçĕн хăйне евĕрлĕх пур-çке-ха. Скульптурăна хыçалтан пăхсан – ăмăрт кайăк. Вăл чи çӳлте вĕçекен кайăк. Чăвашсемшĕн çакскер чи хăватли шутланнă. Пĕр сăмахпа, ку – юмах. Кунта, манăн шухăшпа, хирĕçлемелли нимĕн те çук. Вăл язычество йĕрĕхĕ те мар. Çапла каласан эпĕ те кӳренетĕп. Вырăссен те несĕлсен тĕне кĕмен-çке. Владимир кнеç православи тĕнне йышăнман тăк эпир ун пирки пĕлместĕмĕр те. Тата тепĕр пулăм. Акă Праски Витти хăйне евĕр ĕçлет, çавăнпа вăл ятлă-сумлă. Поэт тепĕр майлă ĕçлет. Калăпăр, ăна: «Паянтан сăвă çырма пăрахатăн», – тесен вăл ăçта кайса кĕрĕ? Ун пек пулаймасть. Халĕ скульптурăна паркран кăларнă та манăн алла касса илнĕ... Çук, эпĕ унпа çырлахмастăп-çке, çав ĕçпех апаланăп. Ӳнерçĕн халăхпа хăйĕн «чĕлхипе» калаçмалла, ăна ирĕк памалла. Вара вăл хăйне евĕр пулать. Парк хапхи çине «Чăваш тĕнчи» тесе çырнă. «Тĕнчи» сăмаха ăнланман-ши? «Тĕн» сăмахпа арпаштарнă-ши? Пачăшкă манпа вырăсла калаçрĕ, чăвашла ăнланмасть ахăртнех, – терĕ Вячеслав Эткер.



### “Геракл çарамас тесен те йăнăш мар”

Паркра тĕп скульптурăсăр пуçне тата тепĕр икĕ палăк вырнаçтарнă. Вĕсем – хапха тата йăлайĕрке ирттермелли сĕтел. Сĕтелĕн пĕр пуçĕнче – çăкăр-тăвар, тепĕр енче – чăваш хĕрарăмĕ. Вăл – ваттисене асăнса, вĕсенчен пил илсе йăла-йĕрке ирттермелли вырăн.

– Паркра çакнашкал тепĕр скульптура лартасшăн. Анчах вăл сăра куркипе пулĕ, тепĕр вĕçĕнче – çăкăр-тăвар. Пĕрремĕшĕ Дагестанра скульптура лартрăмăр. Мăсăльмансем те çакнашкал евĕр палăк вырнаçтарма хирĕç мар-çке. Вăл – Варачан, пăлхар халăхĕ пулса кайнă хыççăн пĕрремĕш тĕп хула шутланнă. 1500 çул каялла пирĕн несĕлсем унтан Атăлçи Пăлхара куçса килнĕ. Ун чухне интереслĕ ĕç-пуç пулчĕ. Дагестанăн виçĕ-тăвата çынни, эпир, чăвашсем, тăраттăмăр. Вĕсем хăйсен хушшинче дагестанла пуплерĕç, пирĕнпе вара вырăсла калаçрĕç. Эпир хамăр хушăра чăвашла пуплерĕмĕр. Вĕсем тĕлĕнчĕç: эпир вĕсен çĕрĕ çинче тăван чĕлхепе калаçма епле хăйнă? Кун хыççăн вĕсем пире тата ытларах хисеплеме тытăнчĕç. Çынра хăйне евĕрлĕхне хаклатăп. Хăть те кам пултăр вăл, анчах хăйĕн ĕçне юраттăр, хисеплетĕр, – калаçăва тăсрĕ Вячеслав Анатольевич.

Скульптор парка аталантарас шухăшлă. Вăл тăвата кĕтесе сăхчăсем лартасшăн. Вĕсем паркра хăйне евĕр чикĕ пулĕç. Унтан Вячеслав Эткер карчăкпа старик сакки те вырнаçтарасшăн. Вăл çапларах пулĕ: пĕр енче – карчăк, тепĕр енче – старик. Вĕсен хушшинче – сак.

– Ун çине ларсан вăтă çав çынсен ăс-тăнне «илетĕн». Тепĕр майлă, вăл пил сакки пулĕ. Тата пысăк чуччу тăвас шухăш пур. Унта çамрăксем ярăнĕç, тĕрлĕ вăйă ирттерĕç. Хĕрпе каччă çемье çавăрсан парка пыччăр, унта ваттисене асăнса, пил илсе йăлайĕрке ирттерччĕр, туй вăййисем выляччăр. Калăпăр, сапан çине пĕрене хуратăн та çамрăк мăшăра мăка пăчкă тыттаратăн. Ан тив, аппаланччăр иккĕшĕ: хăшĕн чунĕ малтан хĕрет? Интереслĕ-çке. Е кăмака пекскер пулĕ. Çемье çавăракан мăшăр паркпа юнашар вырнаçнă музее мĕн пĕçермеллине заявка парĕç тейĕпĕр. Тĕслĕхрен, хуран кукăлĕ янтăламалла. Акă хуран, вутă. Тархасшăн, вылькăр, савăнăр, пĕçерĕр сăн ӳкерĕр. Хĕр çынсене кăтартмашкăн 20-25 кукăль çуптăр. Ытти килте пĕçерниех пултăр. Кукăль янтăланин ятне тусан пурте çак çимĕçе ас тивччĕр. Тĕрлĕрен шухăшласа кăларма пулать. Ĕçе пуçăнсан хĕрсе кайрăм. Паркра урăх вырăна куçарма шухăш тытни питĕ тĕрĕс мар пулчĕ. Унти палăксем никама та кӳрентермен-çке. Çын пултарать тĕк – ан чăрмантар. Хамăн ăнлава эпĕ çак скульптурăсенче çутатрăм. Килĕшмест тĕк – ан пăх. Акă, тĕслĕхрен, Греци мифологине илер. Унта Геракл çарамас тесен те йăнăш мар. Хăйне кăшт çеç хуплană. «Ку чиркĕве хирĕçле пулăм», – тесе никам та каламасть-çке-ха. Кунта мифологи çеç пур, тĕн палли çук. Пирĕн туристсене кăсăклă япалапа тĕлĕнтермелле, илĕртмелле. Малтан парк вырăнне хатĕрлерĕмĕр: хăйăр, тăпра турттарнă, хытă сийлĕ çул сарнă, хапха умĕнче бетон плиткăсем хунă. Çула тăвиччен скульптура пулнă. Унччен никам та нимĕн те каламан-çке. Чăвашсен этнокультурине пĕтерме шухăшлани тĕрĕс мар. Парк çав вырăнтах пулсан аванччĕ, – калаçăва вĕçлерĕ ун чухне Вячеслав Эткер.

## Улшăну пулĕ

Унтанпа вăхăт нумаях иртмерĕ – парк хăйĕн вырăнĕнчех юласине пĕлтерчĕç. Çакна Çĕрпӳ район администрацийĕн пуçлăхĕ Сергей Артамонов та çирĕплетрĕ.

– Кăçал Культура çулталăкĕ пулнă май парксене çĕнетме шухăшларăмăр. 2015 çулта Çĕнтерӳ паркне хăтлăлатасшăн. Этнопарк тумашкăн грант çĕнсе илтĕмĕр, парка икĕ çул аталантарасшăн. Вăл унччен вырăнтах пулĕ. Çакнашкал этнопарка Киров облаçĕнче курнăччĕ. Унта юмахри сăнарсен скульптурисене вырнаçтарнă. Кун пек парк Çĕрпӳре тума шухăшларăмăр. Вăл чăвашсен историне уçса парĕ. Ĕмĕтсем пысăк, вĕсене майĕпен пурнăça кĕртĕпĕр, – çирĕплетрĕ Сергей Геннадьевич телефонпа çыхăнсан.

**Ирина АЛЕКСЕЕВА.**
**Автор тата Н.ПЛОТНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**










**Вĕрентӳпе культура – этем пурнăçĕнчи чи пĕлтерĕшлĕ енсем. Мĕнпе çыхăнса тăраççĕ-ха вĕсем? Çак ыйту тавра калаçăпăр паян «Чуна уçса калаçар» тĕпелте Шупашкарти Н.В.Смирнов ячĕллĕ 33-мĕш вăтам шкулăн чăваш чĕлхипе литературин вĕрентекенĕпе Ирина Диаровăпа. «Талантсăр ачасем пулмаççĕ. Вĕренекен – манăн ăслă тус», – теме кăмăллать вăл.**

# Конкурса хутшăнса çур çул пухнă шалăва тăкакланă

**– Кашни ача шкулта вĕреннĕ чухнех хăйĕн пулас профессийĕ пирки шухăшлать. Эсĕ кун-çулна чăваш чĕлхипе тата литературипе çыхăнтарассине хăçан туйса илнĕ?**

– Эпĕ хама нихăçан та урăх профессире курман. Мĕн хама ас тăвассах вĕрентекенре ĕçлеме ĕмĕтленеттĕм. Ача чухне аппапа шкулла çеç выляттăмăр. Пирĕн килте сарă шифоньер пур. Вăл пирĕншĕн шкул хăмиччĕ, эпир унта пурăпа çыраттăмăр. Паллах, куншăн атте-аннерен леккелетчĕ, çапах педагог пулас килни чунра хĕм пек тĕлкĕшсе çунатчĕ. Чăваш чĕлхипе литературин вĕрентекенĕ пулас ĕмĕт вара вăтам классенче çирĕпленчĕ. Мана чăваш чĕлхи учителĕ Антонина Абаськина конкурссене хутшăнтаратчĕ, çав вăхăтран пуçласа эпĕ хамăн пурнăçа пуян, çепĕç те илемлĕ чĕлхепе çыхăнтарма шут тытрăм.

**– Ача шăпин никĕсне чи малтан ашшĕпе амăшĕ хываççĕ. Мĕнле шухăшлатăн: çак профессие суйлама вĕсем сана витĕм кӳнĕ-и?**

– Эпĕ Канаш районĕнчи Маяк ялĕнче кун çути курнă. Атте эпĕ 5 çулта чухнех çĕре кĕнĕ, çавăнпа анне икĕ ачине, аппапа иксĕмĕре, пĕчченех ура çине тăратнă. Вĕрентекен пулма шăпах анне витĕм кӳчĕ. Кукамай çак районти Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕнчен. Эпĕ ас тăвасса çав ялта пуçламăш классен вĕрентекенĕ Ирина Алексеевна пурччĕ, 1-мĕш класа кайма тытăниччен унпа пĕрле шкула каяссишĕн кукамай патĕнче пурăнаттăм. Анне кăмăлăма шута илсе мана хăйĕн амăшĕ патне час-часах леçетчĕ. Манăн анне çамрăк чухне юрлама ăстаччĕ. Ялти яш-кĕрĕмпе хĕрупраç пулăшнипе хор та йĕркеленĕ. Ыттисем вырăс юррисене шăрантарнă вăхăтра анне чăвашлисемпе чуна тыткăнлатчĕ. Кукамай та чăвашла питĕ хитре юрлатчĕ, аллине хутран-ситрен балалайка та тытатчĕ. Кукаçипе кукамай чăланĕнче йывăç арча пурччĕ. Унта авалхи япаласем упранатчĕç: пиртен тĕртнĕ кĕпесем, тĕрленĕ саппунсем, кĕмĕл тенкĕсенчен ăсталанă хушпу тата сăранран тунă пысăк пупăнь /бубен/. Эпĕ çаксене пĕрмаях кăлара-кăлара пăхаттăм. Кукамай вĕсене мĕнле хатĕрлени пирки каласа паратчĕ.

**– Манăн шухăшăмпа – çакă та сана чăвашлăха тарăн тымар яма пулăшнă, мĕншĕн тесен хăть мĕнле халăх та авалтан пыракан йăли-йĕркине çамрăк ăрăва куçпа курса тата алăпа тытса, ача чĕрине сăмахпа тата тупрапа витерсе çеç вĕрентме пултарать. Çакă ĕнтĕ вăл «культура» текенни.**

– Паллах, ачасене эпир мĕн авалтан упраннă тупрана кăтартнипе, ун çинчен каласа панипе тата чĕлхене вĕрентсе, юрра-ташша хăнăхтарса çеç чăвашлăха аталантарма пултаратпăр. Тăван чĕлхе – пирĕн чи пысăк тупра. Сăмахран, тĕрре вулама пулать. Енчен те чĕлхе пĕтсен çав япаласем те кирлĕ мар пулса тăраççĕ, анчах эпĕ çакна каласа хăварасшăн: пирĕн ытти халăха та хисеплемелле, вĕсен чĕлхипе, культурипе, йăли-йĕркипе интересленмелле. Вырăсла та пĕлмелле, мĕншĕн тесен ют хулана тата республикăсене кайсан мĕнле чĕлхепе калаçмалла-ха? Эпĕ ыттисен чĕлхине пĕлместĕп, вĕсем – манăн чĕлхене. Кун пек чухне пире çывăхлатаканни, пĕрлештерекенни – вырăс чĕлхи.



**– Эсĕ – чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ. Хăв чăваш пулнипе мăнаçланатăн. Пĕлетĕн-и: манăн чылай пĕлĕш хăй чăваш пулнăшăн вăтанать, транспортра анне чĕлхипе калаçмасть, хулара çеç мар, ялта та хăйĕн пепкипе вырăсла калаçма тăрăшать. Енчен те чи çывăх çыннисем те ăна ăса хывтарасшăн мар пулсан ача тăван чĕлхене камран вĕренейтĕр? Мĕн ку – сăпайлăх-и, культура-и, хăйĕн тăван чĕлхинчен хăрани-и е тепĕр халăха хăйĕнчен ытларах хисеплени-и?**

– Ачасемшĕн, чи малтанхи тĕслĕх – атте-анне. Çывăх çынсем мĕнле чĕлхепе калаçаççĕ – эпир те çав чĕлхепе пуплеме тăрăшатпăр. Эпир малтан чăвашла шухăшлатпăр, унтан тин шухăша ăсра вырăсла куçарса калатпăр. Çавăнпа пĕр харăс вырăсла та, чăвашла та вĕрентни пăтăрмах патне илсе çитерет. Ав пирĕн ачасем чăвашла та, вырăсла та аван пĕлмеççĕ. Пĕлĕшсем калаçнинчен кулса вилмелле. Пĕррехинче пĕринчен ыйтатăп: «Эсĕ яла кайсан мĕнле чĕлхепе калаçатăн?» Вăл вара «по-русски» теес вырăнне «по-русскому» терĕ. Ашшĕ-амăшĕ хăйĕн тăван чĕлхине хисеплемест, унпа калаçмасть пулсан ача хăйĕн тăван чĕлхине юратма ăçтан вĕрентĕр-ха тата чăвашла та, вырăсла та мĕнле майпа тĕрĕс калаçтăр? Паллах, вырăсланнă чăваш ачи нихăçан та чăваш юрри-ташшине, кĕпи-тумне, йăли-йĕркине йышăнмĕ.

**– Тĕрĕсех, ачана малтан чăн чăвашла илемлĕ те таса калаçма хăнăхтармалла, унтан тин, тăван чĕлхе никĕсне ăсĕнче хывнă хыççăн, вырăсла е акăлчанла вĕрентмелле... Эсĕ шкулта малтан вырăс чĕлхине ăса хывнă ачасене чăвашла вĕрентетĕн. Вырăс шкулĕнче ĕçлеме çăмăл-и?**

– Учитель ĕçĕ йывăр. Эпĕ шкулта пĕрремĕш çул çеç ĕçлеместĕп, çавăнпа йывăрлăхсем хыçа юлнă. Манран пĕр вĕренекен те: «Чăваш чĕлхи мĕн тума кирлĕ?» – тесе ыйтмасть. Эпĕ ачасене ялахах çапла калатăп: «Çын миçе чĕлхе пĕлет – вăл çавăн чухлĕ хут çын». Тĕслĕхрен, эпĕ китай е ытти чĕлхене те пĕлсен, вĕсем мана нихăçан та кирлĕ пулмасан та, эпĕ çав чĕлхесемпе калаçайнăшăн питĕ мăнаçланăттăм. Акă шкулта акăлчан чĕлхи вĕрентекенĕпе хутшăннă чухне хутран-ситрен йывăр мар предложенисене ют чĕлхепе калама тăрăшатăп. Çапах ытларах чухне чăвашла пĕлмен вĕрентекенсемпе те, ачасемпе те чăвашлах калаçатăп. Ку пулăмран мана паллакансем тĕлĕнме пăрахнă, çавăнпа ансат ыйтусене чăвашлах хуравлаççĕ.

**– Эпĕ хулари чылай шкула чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем чĕннипе тĕл пулусене çӳретĕп. Мана йыхравлакансем урок хыççăн коридорта ачасемпе чăвашла калаçманни чуна ыраттарать. Урок вĕçленсен чăваш чĕлхи кирлĕ мар пек пулса тухать-çке!**

– Енчен те чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ те ачасемпе чăвашла калаçмасан вĕсемшĕн кам тĕслĕх пулĕ? Мĕн пытармалли: вырăс чĕлхи е математика учителĕ чăваш пулсан та ачасемпе шкулта тăван чĕлхепе калаçмасть. Икĕ çул каялла эпир, чăваш чĕлхи учителĕсем, ЧНК делегацийĕн йышĕнче Хусанти шкулта пултăмăр. Виçĕ урок пăхрăмăр. Ун чухне пĕр вĕрентекен те пирĕнпе вырăсла калаçмарĕ. Пĕри те: «Кусем Чăвашран килнĕ-ха, тутарла пĕлмеççĕ пуль», – тесе пăшăрханмарĕ. Юрать, тутарсен хушшинче çӳрекеленĕрен кăштах тутарла тĕшмĕртетĕп. Эпĕ çуралнă ял çумĕнче тутар ялĕ Хăмăл пур.

**– Пĕлтĕр çулталăк вĕçĕнче Пушкăрт çĕрĕнчен килнĕ чăваш делегацийĕпе пĕрле эпĕ те эсĕ ирттернĕ уçă урокра пултăм. Ачасем ас туса юлччăр тесе эсĕ пĕр сăмахах 20 хут та калаттартăн. Çак мелпе усă курма сана кам вĕрентнĕ?**

– Ĕç опычĕ. Кашни вĕренӳ çулĕнчех тĕрлĕ шкулта семинарсем ирттеççĕ. Эпĕ кашнинех çитме тăрăшатăп, яланах урокран хам валли мĕн те пулсан çĕннине илетĕп. Ачасемпе ĕçлеме питĕ интереслĕ, эпĕ вĕсене çав тери юрататăп. Чи кăсăкли – ачасем хăйсемех мĕнле вĕрентмеллине каласа, кăтартса пама пултарни.

**– Хăвăн чи ансат мелпе ирттернĕ урокăн пĕр саманчĕпе сăмах урлă паллаштар-ха.**

– Кашни уроках фонетика вăййинчен пуçлатăп. Ку ачасене тепĕр чĕлхене вĕренме хăвăрт пулăшакан, чăвашла çăмăллăнах калаçма май паракан мел. Тĕслĕхрен, пĕрре – пĕрел, иккĕ – йĕкел, виççĕ – виçе, тăваттă – тăваткал, пиллĕк – пилеш, улттă – улма, çиччĕ – çырла, саккăр – салма, тăххăр – тăрна, вуннă – тух.

**– Ун чухнехи уçă урок хыççăн пирĕнпе шкул директорĕ Александр Радужан калаçрĕ. «Эпĕ – Дон казакĕ. Маншăн шкулти кашни предмет пĕлтерĕшлĕ. Чăваш чĕлхине пĕлместĕп пулсан та эпĕ ăна ытти предметпа тан куратăп», – терĕ вăл. Чăваш чĕлхине çапла хаклани питĕ кăмăллă. Эпĕ чăваш чĕлхин пĕр вĕрентекенĕнчен урăххине те илтрĕм. «Манăн ирĕк пулсан чăваш чĕлхине шкултан шăпăрпа шăлса кăларăттăм!» – тенĕ ăна шкул директорĕ.**

– Вĕрентекене питĕ шел. Унашкал пуçлăхсемпе ĕçлеме питĕ йывăр. Ахаль те чăваш чĕлхи сехечĕсене министерство шайĕнчех чакарчĕç. Пуçламăш классенче икĕ сехет хăварчĕç. Çав вăхăтрах тутар чĕлхине тутарсем пилĕк сехет вĕрентеççĕ. Мĕнрен килет-ши ку? Хуравне пĕри те калаймастпăр.

**– Чи малтанах ку чăваш шăлсăр пулнипе çыхăннă... Эсĕ вырăс тата вырăсланнă чăваш ачисене чăваш чĕлхине юратсах вĕрентнине ăнлантăм. Хăвăн ывăлупа килте чăвашлах калаçатăн-и-ха?**

– Паллах. Кирлĕ чухне çеç – ытти предмета вырăсла вĕренетпĕр-çке – вырăсла. Урăх предметпа урок тунă чухне манăн унпа ирĕксĕрех вырăсла калаçма тивет.

**– Унччен ЧНКра эсĕ хастаррисен йышĕнчеччĕ. Халĕ вара лару-тăру еплерех?**

– Çĕнĕ пуçлăх ларнă хыççăн лару-тăру улшăнчĕ, халĕ ЧНКра урăхла йĕрке. Шел те, унта часчасах çӳреме майсем сахалланчĕç, мĕншĕн тесен Чăваш наци телекуравĕнче те «Илемпи урокĕсем» кăларăма ертсе пыратăп. Ăна хатĕрлеме вăхăт самай кирлĕ.

**– Санăн шухăшупа – çак кăларăмăн усси пурах-ши?**

– Пур. Кăларăм эрнере пĕрре тухать. Ачасем ăна юратса пăхаççĕ. Кăларăм нумай вăхăт пымасть пулин те чăвашла пачах пĕлмен ачасене пулăшу кӳретех.

**– Çак кунсенче манăн пуçра пĕр шухăш çуралчĕ. Ăна «Одноклассники» социаллă сайтри хамăн страницăра статуса кăлартăм. Укçа пуçтарса Геннадий Дегтяровăн «Изучаем чувашский язык» кĕнекине туянса чăвашла пĕлмен чиновниксене парнелеме чĕнсе çыртăм. Манпа килĕшекенсем чылайăн тупăнчĕç. Кун пирки санăн кăмăлна та пĕлес килет.**

– Ку шухăшпа килĕшетĕп. Тĕллевĕ питĕ ырă. Енчен те вăл пурнăça кĕрсен аван пулмалла.

**– Нумаях пулмасть эсĕ Мускавран Пĕтĕм Раççейри тăван чĕлхе вĕрентекенĕсен конкурсĕнчен çĕнтерӳпе таврăнтăн.**

– Пĕлтĕрхи ака уйăхĕнче чăваш чĕлхипе литературин вĕрентекенĕсен республика шайĕнчи конкурсĕ иртрĕ. Эпĕ унта малти вырăна тухрăм. Йĕрке тăрăх çĕнтерӳçĕ Мускава каять. Чи малтанах Интернета урок вырнаçтармалла пулчĕ. Енчен те урок тивĕçлĕ шайра пулсан Мускавран йыхрав килет. Конкурсăн çак тапхăрĕ витĕр эпĕ хамăн наука ертӳçипе, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕпе, Вĕренӳ институчĕн преподавателĕпе Альбина Волковăпа, ăнăçлă тухрăм. Кайран комиссие ятарлă папка пуçтарса ярса патăм. Унта – хам çинчен çырнă досье, аналитика справки, пĕр урокăн тулли конспекчĕ, класс тулашĕнчи пĕр ĕçĕн сценарийĕ, «Манăн педагогикăри çĕнĕлĕхсем» эссе, пичетленнĕ статьясем. Конкурс йĕркелӳçисем пĕлтĕрхи чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче йыхрав ячĕç. Конкурс виçĕ тапхăртан тăчĕ. Пĕрремĕш кунхине курав йĕркелерĕмĕр, унта хамăн тата ачасен ĕçĕсене уçса паракан тĕрлĕ методика кăтартăвĕ, ӳкерчĕксем, чăваш тĕрриллĕ салфеткăсем, пуканесем, панносем вырнаçтартăмăр. Иккĕмĕш кунхине «Манăн республика, манăн хула, манăн педагогикăри ĕç» хăтлав-презентаци кăтартмалла пулчĕ. Ăна тума пире Чăваш наци телекуравĕ пулăшрĕ. Кунтах наци тумĕ çинчен каласа патăмăр. Мана ку конкурсра Зинаида Козлова ертсе пыракан «Юрай чечекĕ» фольклор ушкăнĕ пулăшрĕ. Виççĕмĕш кунхине кунтанах ӳкерсе кайнă видеоурок кăтартрăмăр, 10 минутлăх комментари турăмăр. Тăваттăмĕш кунхине РФ Патшалăх думинче пултăмăр. Чи малтан унта наци ыйтăвĕсем тавра «çавра сĕтел» иртрĕ, кайран пире чысларĕç.

**– Хăвăншăн мĕн çĕнни илейрĕн çав конкурсран?**

– Тĕрĕссипе, манăн ку мероприятие конкурс теес килмест, мĕншĕн тесен вăл уяв пек иртрĕ. Пурте хăйсен наци тумне тăхăнса пынă та эпир пурте пысăк асамат кĕперĕ е улăхри чечексен кăшăлĕ евĕр пултăмăр. Кашни вĕрентекенĕн мĕн те пулсан çĕнни пур. Кашниех хăйĕн ĕçне, халăхне, тумне, ташши-юррине кăтартнă чухне мăнаçлăхпа тулса тăчĕ.

**– Мускав – хаклă хуласенчен пĕри. Чăваш чĕлхи вĕрентекенĕн кĕсйи хулăн мар. Аякка фольклор ушкăнĕпе кайса килме спонсорсем пулăшрĕç-им?**

– Шел те, хамăн çур çул пухса пынă ĕç укçине çак конкурса хутшăнса тăкаклама тиврĕ. Ытти расхута саплаштарма ЧР Вĕренӳ министерстви, Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикинчи полномочиллĕ представителĕ Леонид Волков, Юрий Зорин, Николай Лукианов, Александр Портнов тата анне пулăшрĕç. Вĕренӳ министрĕ ячĕпе ЧНКна çырупа тухнăччĕ – ара, чăваш чĕлхи вĕрентекенне конгресс та пулăшмасан камăн пулăшмалла-ха? Эпир Мускава чăвашлăха хӳтĕлеме кайнă-çке. Анчах, шел те, хурав кĕтсе илеймерĕмĕр. Унти юлташсен те вăхăчĕ тупăнмарĕ, те кăмăлĕ пулмарĕ – пулăшу кĕтсе илеймерĕмĕр. Апла-и, капла-и – чăвашлăха тивĕçлĕ шайра хӳтĕленĕшĕн чун-чĕререн савăнтăм.

**– Культура çулталăкне кĕни – виçĕ эрне ытла. Иртнĕ эрне кун Оперăпа балет театрĕнче çак ятпа хатĕрленĕ концертра пултăм. Хама Кремльти пекех туйрăм. Питĕ чаплă концерт йĕркеленĕ, залра лăк тулли халăх. Пухăннисен 90 проценчĕ чăваш. Питĕ килĕшрĕ, анчах йыхравра та, афишăсенче те, экран çинче те чăвашла пĕр сăмах та çырманни, ертсе пыракансем чăвашла пĕр сăмах та каламанни питĕ тĕлĕнтерчĕ.**

– Ку, чăнах та, тĕлĕнмелле пулăм. Вырăсла çырнăшăн ӳпкелешер мар, Раççейре пурăнатпăр, çапах вырăс сăмахĕсем çумне чăвашла çырнă пулсан ку пирĕн чунсене пуянлатса илемлетĕччĕ. Пирĕн, чăвашсен, чăваш пулсах пурăнасчĕ, хамăрăн чĕлхене ытти халăх умĕнче намăс кăтартас марччĕ, эпир кайсан та чăваш сăмахĕ уççăн янăратăр, чăваш юррикĕввине, çи-пуçне, йăли-йĕркине пирĕн ачасем пĕлччĕр-курччăр.

**Альбина ЮРАТУ калаçнă.**

# Студентсен утравĕ

Аслă тата вăтам пĕлÿ паракан вĕренÿ учрежденийĕсенче ăс пухакан çамрăксен кăларăмĕ

МАТТУРСЕМ!

# Хăйсене литература сăнарĕсемпе танлаштарасçĕ

**Иртнĕ ĕмĕрте Совет Союзĕ чи вулакан çĕр-шыв шутланнă. Çынсем тaçта та – урамра, транспортра, библиотекăра, килте... – вуланă. Халĕ вара кĕнеке вырăнне компьютер, Интернет, кинофильмсем йышăнчĕç. Çапах, социаллă тĕрлĕ тĕпчев пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх, студентсен пĕр пайĕ алла куллен кĕнеке тытма пăрахман-ха. Экономика аслă шкулĕн Чул хулари наци тĕпчев институчĕн тишкерĕвĕпе килĕшÿллĕн – вĕренекен çамрăксен пысăк пайĕ /75%/ илемлĕ литература хайлавĕсене вулать. Çавăн пекех фантастика произведенийĕсене, приключениллĕ повеç-романа куллен шĕкĕлчекенсем те пур.**

**Чăваш Енри студентсен хушшинче кашни кун алла кĕнеке тытакансем пур-ши? Çак ыйтăвăн хуравне тупма И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ библиотекин илемлĕ литература уйрăмне шăнкăравларăм. Елена Егорова тĕп библиотекарь паянхи çамрăксем кĕнеке сахал вуланине палăртрĕ. Çапах чăваш, вырăс филологийĕсен тата журналистика факультечĕн студенчĕсен йышĕнче вулавăша тăтăш çÿрекенсем пур иккен. Тĕп библиотекарь ултă хушамат асăнчĕ. Чăваш филологийĕн уйрăмĕнче 5-мĕш курсра вĕренекен Сарра Романовăпа тата Анжела Федоровăпа тĕл пултăм.**



## Килте – чухăн мар библиотека

Элĕк районĕнчи Какаç ялĕнчи Романовсен çемйинче çуралнă Сарра утма, сас паллисене уйăрма хăнăхсанах килти çÿлĕк çинчи кĕнекесене тыта-тыта пăхнă. Вулама вĕренсен вара Никифор Мранькан "Ĕмĕр сакки сарлака" романĕн пилĕк томне тĕлĕнсе сăнанă: писатель çавăн чухлĕ епле çырма пултарнă-ха? Саррăн ашшĕпе амăшĕ иккĕшĕ те кĕнеке вулама кăмăлласçĕ, çамрăк чухне вĕсем унпа тата ытларах туслă пулнă. Сарра, ахăртнех, вĕсенчен тĕслĕх илнĕ.

Университетран кĕçех вĕренсе тухакан пикен халĕ кĕнеке тытман кун çук. Эрнере 10 хайлавран сахал шĕкĕлчемест вăл. Чăваш литературинчи хальхи çыравçăсен калав-повеçне ытларах килĕштерет.

– Елен Нарпин "Çур çĕр хыççăнхи çул çÿрев", "Чечексем çеçке тăксан", Надежда Ильинан "Турăсăр тупнă телей", "Юлашки кĕр" хайлавĕсене сывлăш çавăрмасăр тенĕ пек вуларăм, – калаçу пуçарчĕ 22 çулти Сарра Романова. – Сергей Павловăн "Сĕлкĕш", "Тан таппи", "Авăр" произведенийĕсене кăмăлларăм. Унсăр пуçне Геннадий Максимовăн "Çĕрĕллĕ хура кушак" кĕнеки килĕшрĕ.

Сарра чăваш литературине кăна мар, вырăссенне те кăмăллать. Шкул ачисенчен, студентсенчен чылайăшĕ Лев Толстойăн "Война и мир" эпопея романне пачах вуламан пулсан Элĕк районĕн пики ăна пуçламăшĕнчен вĕçне çити пĕр сас палли сиктермесĕр шĕкĕлченĕ. Ку кăна та мар. Сарра çак хайлава чи юратнисен шутне кĕртрĕ.

## Паянхи самана ыйтăвĕсем

Муркаш районĕнчи Çатракассинче çуралнă Анжела Федоровăн та амăшĕ кĕнеке вулама ухута. Вĕсем кÿршипе тупăшса шĕкĕлчеççĕ те кайран сюжета пĕрле сÿтсе яваççĕ иккен. 21 çулти Анжелăн та кĕнеке вуламан кун çукпа пĕрех. Çак таранччен çĕр-çĕр кĕнеке шĕкĕлченĕскер чылай хайлава вулама пуçласан вĕçне çитмесĕр чарăнаймасть. Акă "Шурă туй кĕпи" повеçе вăл куç сиктермесĕр йĕрленĕ.

– Альбина Мышкинăн "Пĕчĕк Эдгарăн вăрăм кунĕ" калавĕ, Арсений Тарасовăн "Сутнă пÿртри юлашки каç", "Икĕ вată", "Шăрчăк" хайлавĕсем чуна тыткăнлаççĕ. Халĕ ав унăн пьеси тăрăх Чăваш патшалăх академи драма театрĕ "Мунча кунĕ" спектакль лартрĕ. Епле интереслĕ! Арсений Алексеевичăн хайлавĕсем паянхи саманана çывăх пулнипе илĕртеççĕ, чĕлхи çăмăлли те малалла вулама хĕтĕртет. Геннадий Максимов "Ачаллă хĕрарăм" калавра наркомани ыйтăвне хускатни кăмăла кайрĕ, – калаçу çăмхине сÿтрĕ Анжела Федорова.

Вăл та, Сарра та кĕнекене каçхине тата çĕрле вулаççĕ. Экзаменсене хатĕрленнĕ вăхăтра вĕсен умĕнчен кĕнеке каймасть. Филологи уйрăмĕнче пĕлÿ илекенсен пĕр сесси вăхăтĕнче кăна вун-вун кĕнеке вулама тивет. Вĕсен ют çĕр-шыв, вырăс тата чăваш литературисене аван пĕлмелле. Çак студенткăсене экзаменра вуламан хайлавпа çыхăннă ыйту лекнĕ-ши?

– Эпир программăри мĕн пур произведение вулама тăрăшатпăр, критикăпа çыхăннă ыйтусене те пăхса тухатпăр. Çавăнпа пире пĕлмен ыйту нихăçан та лекмен, – пĕр саслăн палăртрĕç Саррăпа Анжела.

## Салампи утнă çулпа утмĕç

Литературăна кăмăллакансенчен чылайăшĕ палăртнă тăрăх – вĕсем пурнăçри кăткăс ыйтусене самантлăха та пулин манас тĕллевпе кĕнеке уçаççĕ, повеç-роман сăнарĕсен кун-çулĕпе кăсăкланса кăмăлне çĕклеççĕ. Саррăпа Анжела та экзаменра "5" илессишĕн çеç алла кĕнеке тытмаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те вуланă май хăйсене хайлаври сăнарсен вырăнне лартаççĕ. "Кун пек лару-тăрура эпĕ хама мĕнле тытăттăм-ши?" – теççĕ. Апла вĕсем Александр Артемьевăн "Салампи" повеçĕпе паллашнă май мĕн çинчен шухăшланă-ши? Салампи утнă çулпа утĕччĕç-ши?

– Эпир сăпайллă чăваш пикисем, çапах повеçĕн тĕп геройĕ пек хĕр пуçăн ют ачана илеймĕпĕр, – татăклăн палăртрĕç пулас вĕрентекенсем.

Чăвашсен хальхи литературине кăмăллаканскерсем çĕнĕ калав-повеçе епле хаклаççĕ-ха?

– Хăш-пĕр авторăн пултарулăхĕнче XXI ĕмĕрти çамрăксене япăх енчен кăтартасси, вĕсене тиркесси тĕп вырăн йышăнать. Яшсемпе хĕрсен йышĕнче лайăххисем те пур-çке, пурне те пĕр калăппа виçме кирлех-ши? – чунне уçрĕ Сарра Романова.

– Çапах паянхи литературăна тиркеме сăлтав çук. Çыравçă сахал мар, вĕсем вулакансен кăмăлне каймалли произведенисемех хайлаççĕ. Пĕр самант çеç пăшăрхантарать: кĕнекесен тиражĕ пĕчĕк. Акă Геннадий Максимовăн "Çĕрĕллĕ хура кушакĕ" университет библиотекинче çук. Чылай хайлавпа "Тăван Атăл" урлă çеç паллашатпăр, – палăртрĕ Анжела Федорова.

## Писательсемпе курнăçни – кăсăклă самант

Чăваш филологийĕн уйрăмне çыравçăсемпе поэтсем тăтăшах пырса çÿреççĕ. Студенткăсем нумаях пулмасть "Сапаскар хĕрĕ" кĕнеке авторĕпе Ангелина Павловскаяпа, Александр Гринăн хайлавĕсене чăвашла куçаракан Алексей Леонтьевпа тĕл пулнине палăртрĕç.

– Ангелина Павловская хăйĕн кĕнекисем çинчен кăна мар, кун-çулĕ пирки те тĕплĕн каласа кăтартрĕ. Паллах, писателĕн пултарулăхне кăна мар, пурнăçне те пĕлес килет. Кун пек тĕл пулусем хăпартлантараççĕ, – манăн шухăша вуланăн ăнлантарчĕç студенткăсем. – Пире "чăваш литературин историйĕ" дисциплинăна Екатерина Якимова вĕрентет. Вăл кичем хайлав çинчен те интереслĕ каласа кăтартма, пире илĕртме пĕлет. Экзаменра та унпа произведенисене тĕпĕ-йĕрĕпе хаваспах сÿтсе яватпăр. Литература вĕрентекен Ольга Евдокимовăпа Юрий Смирнов вара питĕ çирĕп ыйтаççĕ, яш е хĕр произведение вуланипе вуламаннине сюжетри вак самантсемпе çыхăннă ыйтусем парса тĕрĕслеççĕ. Ку та кирлĕ. Студентсем экзамена хатĕрленмесĕр пырса лараймĕç.

## "Шупашкарта та çавăн пек парк кирлĕ"

– Мускаври чылай паркра çуллахи вулавăшсем пур. Унта кашни сырăш çумĕнчех 7-8 кĕнеке выртать. Уçăлса çÿрекенсем, канса лараканcем – çамрăксем те, ватă çынсем те – çав кĕнекесене ахалех илсе вулаяççĕ. Гоголь паркне кĕрсен питĕ тĕлĕнтĕм: вулакан нумайччĕ. Эпĕ те кĕнеке илсе шĕкĕлчерĕм, – каласа кăтартрĕ Сарра Романова. – Шупашкарта та çавăн пек парксем пулсан тем пекехчĕ. Анчах унашкал йăлана пуçарсан та кĕнекесем паркран çухалмĕç-ши? Иккĕлентерет.

Тĕрĕссипе, Мускавпа Питĕрте общество транспортĕнче кĕнеке вуламан çын сайра. Пурин аллинче тенĕ пекех планшет. Шел те, Шупашкарти троллейбус-автобусра кĕнеке вулакана тахçан пĕрре кăна тĕл пулма май пур. Саррăпа Анжела та ытти çамрăк пекех электрон мелпе вулама хапăл тăваççĕ-ши?

– Çук, – йĕкĕреш пек пĕр саслăн хуравларĕç вĕсем. – Кĕнеке тытса вулама кăмăллăрах, кун пек чухне автор вăй-хăватне туятăн. Компьютер – техника кăна, унăн чунĕ çук.

– Сирĕн шухăшпа, паянхи çамрăксен пысăк пайĕ кĕнекепе мĕншĕн туслашмасть? – юлашкинчен ыйтрăм эпĕ.

– Вăхăт çитсе пыманнипе. 30-40 çул каялла çынсен урăх интерессем пулнă. Ун чухне хваттер туянма укçа пухас хуйхă та канăçсăрлантарман. Халĕ çамрăксене нухрат çитсе пыманни ура хурать. Университет-институтра куçăн майпа вĕренекенсемех ĕçлеççĕ. Хăшĕ-пĕри икĕ вырăнта вăй хума та ĕлкĕрет. Кайран та, мăшăрлансан, пушă вăхăт тупаймăн – çемьене тăрантармалла, кредит тÿлемелле... Хăçан вулас? – калаçăва вĕçлерĕ Сарра Романова.



# Вĕренеççĕ, талпăнаççĕ, çĕнтереççĕ...

**Чăваш Енре 21 аслă шкул. Техникумсемпе колледжсен, училищĕсен шучĕ – 35. Вĕсенче 76 пин те 500 çамрăк вĕренет. Çак йышран 48 пинĕшĕ аслă пĕлÿ паракан учрежденисенче ăс пухать.**

Вĕренекен çамрăксем пĕлĕве занятисенче тарăнлатнипе кăна çырлахмаççĕ, тĕрлĕ-тĕрлĕ конкурса, олимпиадăсемпе фестивальсене хутшăнаççĕ. Çамрăксене ăслăлăх-тĕпчев тытăмне илĕртес тĕллевпе республикăра çуллен 200 ытла мероприяти йĕркеленет. Вĕсен йышĕнче – "Excelsior", "Анлă Атăл çамрăклăхĕ", "XXI ĕмĕрти наука", "Çулталăкри аспирант", "Чăваш Енри чи лайăх çамрăк ăсчах", "Уçă лекци", Пĕрремĕш утăм – малалла", "Çамрăксен хули"...

Пултаруллă яшсемпе хĕрсем çулленех Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премине илессишĕн тупăшаççĕ. 1996 çултанпа сумлă çак хавхалантарăва 92 яш-хĕр тивĕçнĕ. 2004 çултанпа кашни çулах 1 пин çамрăка ЧР Пуçлăхĕн стипендине параççĕ. Çак таранччен ăна 11 пин ар-хĕр илсе тăнă. Кăçал 1830 тенкĕпе танлашакан стипендие /ăна уйăхсерен параççĕ/ тивĕçнисен 60 процентĕ – вĕренекен яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç, 8 процентĕ – çамрăксен общество пĕрлешĕвĕн хастарĕсем.

2006-2013 çулсенче "Вĕренÿ" наци проекчĕпе килĕшÿллĕн республикăри 506 яш-хĕре Раççей Президенчĕн премине панă. Общество организацийĕнче тăракан 84 каччăпа пикен проектне пурнăçа кĕртме 1 миллион та 952 пин тенкĕ уйăрнă.

Çамрăк ăру "Студентсен çуркунни", "СОК" фестивальсенче, КВН вăййисенче уйрăмах маттур.



СТИПЕНДИАТ

# Экзамен умĕн билет ыйтăвне тĕлĕкре курнă

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

Ирина Николаева Комсомольски районĕнчи Анат Тимĕрчкассинче çуралса ÿснĕ. Ача чухне шкулла выляма кăмăллаканскер ÿсерехпе пурнăçне вĕрентекен ĕçĕпе çыхăнтарасси пирки шухăшланă, çапах аслă классенче ăс пухнă вăхăтра "Каçал ен" район хаçачĕпе çыхăну тытнă май ăна журналист профессийĕ те илĕртнĕ. Пур пĕрех шкултан кĕмĕл медальпе вĕренсе тухнă Ирина педагогика вузĕн сукмакне такăрлатма тытăннă. Кирек мĕнле студент та пĕрремĕш сессирен шикленет. Комсомольски районĕн пики те университетри пирвайхи экзаменран хăранă.

Чылай студент кун йышши тĕрĕслевре 13-мĕш билет ан лектĕр тесе турра кĕлĕ тăвать. Ирина хыçа юлнă тăхăр сессири экзаменсенче кунашкал билета алла тытса курнă-ши?

– Лекнĕччĕ. Тантăшсем уйăхăн 13-мĕш кунĕ эрне куна лексен те сехĕрленеççĕ. Эпĕ тĕшмĕше ĕненместĕп те çак хисеплĕ билета туртса кăларсан та тĕлĕнмерĕм, хăрамарăм. Тĕрĕссипе, этемĕн япăххи пирки шухăшламалла мар, унсăрăн вăл хамăр сисичченех ума çитсе ÿкĕ, – калаçу çăмхине сÿтрĕ студентка. – Пĕлетĕр-и: пĕррехинче, Петр Метин ертсе пынă "Литература теорийĕ" дисциплинăпа экзамен тытас умĕнхи каç, тĕлĕк тĕлленчĕ. Ĕненместĕр: тĕрĕслевре унта курнă билета туртса кăлартăм. Профессор: "Çырса ларнипе ăс кĕмест, хуравлама тухăр", – терĕ те унăн умне хатĕрленмесĕрех пырса лартăм, ыйтусене туллин хуравларăм.

Студент çăкăрне çисе курнисем лайăх пĕлеççĕ – хăш-пĕр преподаватель патне зачет тытмашкăн виçĕ-тăватă хут чупма тивет. "5"-пе кăна ĕлкĕрсе пыракан Иринăн кун пекки пулнă-ши?

– Пулмасăр! Эпĕ студент мар-им? Чăнах та, хăш-пĕр зачет экзаменран та йывăртарах. ОБЖпа зачета аран-аран тытни халĕ те асрах. Пĕррехинче философипе пĕтĕм ушкăнпа экзамена икĕ хут кайрăмăр, – аса илчĕ студентка.

Филологи уйрăмĕнче пĕлÿ илекенсен пĕр семестр вăхăтĕнче çĕр-çĕр кĕнеке вулама тивет. Чылай студент литература экзаменне мĕн пур хайлава шĕкĕлчемесĕрех тухса утать. Ирина вара ыйтусенче пур кашни произведениех тишкерме тăрăшать, çавăнпах хăш-пĕр экзамена пач куç хупмасăр кайни те пĕрре мар пулнă унăн. Сăмах май, Иринăн амăшĕ экзаменсемшĕн хĕрĕнчен те ытларах пăшăрханать, çавăнпа асламăшĕпе кукамăшĕ те мăнукĕ хăçан тата мĕнле дисциплинăпа зачет-экзамен тытнине пĕлсе тăраççĕ.

Пулас педагогсен шкулсенче практика тухмалла. Ирина Николаева пĕрремĕш практикăна Шупашкарти 5-мĕш гимназире ирттернĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕн, министрсен, ытти тÿре-шаран ачисем ăс пухакан пĕлÿ çурчĕ студенткăн асĕнче епле çырăнса юлнă-ха?

– Питĕ кăмăллă ачасем вĕренеççĕ унта. Ашшĕ-амăшĕ пысăк должноç йышăннине курса мăн кăмăлланса, пуçтахланса çÿрекенсене курман. Пире, çап-çамрăкскерсене, итлетчĕç, хушнине яланах пурнăçлатчĕç. Пĕррехинче шăпăрлансем мана: "Тархасшăн, пире паян та вĕрентĕр-ха", – тенĕччĕ. Чăваш чĕлхинчен те пăрăнмаççĕ – амăшĕсем валли чăвашла сăмахсемлĕ открытка хаваспах янтăларĕç.

Хальхи чăваш литературине кăмăллакан пикен, Людмила Сачковăпа Сергей Павлов хайлавĕсене уйрăмах мала хураканскерĕн, шухăшĕпе – общежитире пурăнса курман çамрăк студент ятне тивĕç мар. Мĕншĕн-ха? Ара, кунта туслăх чăмăртанать-çке, вăхăта пĕрле хаваслă ирттерме майсем пур. Шкул вăхăтĕнче те, университетра ăс пухнă çулсенче те тĕрлĕ олимпиадăна хутшăнса палăрнă Ирина Дагестанра иртнĕ Туслăх эрнине кайса килни пирки хавхаланса каласа кăтартрĕ:

– Çĕр-шыври 20 университетран пухăннă çамрăксем пĕр эрнере мĕнле кăна мероприятие хутшăнмарăмăр-ши? Кампа кăна курса калаçмарăмăр-ши? Дагестан патшалăх педагогика университетĕнче вĕренекен Непал каччин сăмахĕ тĕлĕнтерчĕ. Унăн тăван çĕр-шывĕнче культура енĕпе ăс пухакан каччăсене хисеплемеççĕ иккен. Çав тери илемлĕ саслă, питĕ хитре юрлакан йĕкĕтĕн çывăх çыннисене те улталама тивнĕ. Ашшĕ-амăшĕ вăл журналистика факультетĕнче вĕренет тесе шухăшлать, – калаçăва тăсрĕ спортпа та туслă Ирина.

Спорт тенĕрен, студентка мĕн пĕчĕкренех çăмăл атлетика ăмăртăвĕсене хутшăнать, йĕлтĕрпе чупать. Пĕлтĕр Шупашкарти кÿлмек хĕрринче иртнĕ "Ман хыççăн чуп" акцире те вăл 2-мĕш вырăна тухнă. Ирина факультетсене пĕрлештериччен студентсен деканачĕн ертÿçи пулнă, халĕ вăл – историпе филологи факультечĕн студдеканат ертÿçин çумĕ. Ку кăна-и? Пике тăван университетăн управлени факультетĕнче те вĕренет. Унта вăл 4-мĕш курса çитнĕ. Пĕр кунрах 2-3 экзамен тытаканскер Чăваш наци радиовĕнче ĕçлеме те вăхăт тупать. Унăн илемлĕ сассине "Чĕререн тухакан сăмахсем" кăларăмра итлеме пулать. Тĕрĕссипе, унта кăна та мар – пике Надежда Заводскова йĕркеленĕ "Эмине" чăваш эстрада ушкăнĕнче те юрлать. Вăл хăйне ятăн тăвата юрă çыртарнă. Пĕр юррине – "Атте-анне" ятлине – хăйĕн сăввине кĕвве хывса хатĕрленĕ.

5-мĕш курс студентки тaçта та çитме мĕнле майпа ĕлкĕрет-ши? Каçхи клубсенче ташласа ывăннă çамрăксем те занятисенче пуçа сĕтел çине хурсах тĕлĕреççĕ те – тĕрлĕ мероприятие чупакан Ирина аудиторире çывăрса каймасть-ши?

– Эх, намăс! Ун пекки те пулнăччĕ çав. Пÿлĕмсенче ăшă, лекци итлени ывăннă яш-хĕре çывăрттарать. "Чăваш литературине вĕрентмелли методика" дисциплинăна ертсе пыракан Надежда Степановăн лекцийĕнче эпĕ тĕлĕрсе кайнă. Юнашар ларакан хĕр тусăм аякран чавсипе пĕрре тĕкрĕ-ха, çапах ыйхă вĕçмерĕ. Преподаватель урама тухса уçăлма сĕнчĕ вĕт, – иртнине куç умне кăларчĕ ЧР Пуçлăхĕн стипендиатки.

Пĕр харăсах икĕ факультетра вĕренекен Ирина Николаева дипломсене илсен шкулта ĕçлĕ-ши?

– Хальлĕхе ку ыйтăва татăклăн хуравлаймастăп – университет пĕтерсен куç курĕ. Ачасене юратнăран, учитель ĕçне кăмăлланăран эпĕ шкулта вăй хума пĕрре те хирĕç мар, – калаçăва вĕçлерĕ вĕренÿ отличници.

ЫЙТСА ПĔЛТĔМĔР

# Мĕнлерех унăн портречĕ?

**Халăх шухăшĕпе – хальхи студентсем, 20-30 çул каяллахисемпе танлаштарсан, пачах урăх. Романтика реализма ылмашăннă, ушкăншăн мар, харпăр хăйшĕн тăрăшасси мала тухнă. Чăннипех те çаплаши? Тĕрлĕ тытăмра ĕçлекенсене паянхи студент портретне "ÿкерме" сĕнтĕмĕр.**

### Тухтăр куçĕпе

**Юрий ВИКТОРОВ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн профилактори санаторийĕн тĕп тухтăрĕ:**

– Университет-институтра паян вĕренекене 20 çул каяллахи студентпа танлаштараймăн. Ку çĕрпе пĕлĕт пекех. Халĕ те маттуррисем, пуçаруллисем пур-ха, анчах ытларах пайĕ спортпа пачах туслă мар. Вĕсем хăйсен сывлăхĕ пирки шухăшламаççĕ: ÿт-пĕве пиçĕхтермеççĕ, сиенлĕ йăласемпе туслашаççĕ... Паянхи студентăн кăна мар, студенткăн портречĕ те сисчĕвлентерет. Вĕсен йышĕнче пирус мăкăрлантаракан, сăра таврашне питĕ ир, шкулта вĕреннĕ чухнех, тутанакан нумай. Чирлессе те унччченхисенчен ытларах чирлеççĕ. Студентсене мĕн ытларах нушалантарнине палăртма çук – этемĕн мĕнле чир пур, студентсене те çавсемех канăçсăрлантараççĕ.

### Стилист куçĕпе

**Ираида АЛЕКСЕЕВА, Шупашкарти "Гармония" имидж-студи ертÿçи, стилист-имиджмейкер, преподаватель:**

– Тумланас енĕпе студентсен пысăк пайĕ пĕр евĕрлĕхе кăмăллать. Каччăсем кăна мар, пикесем те пурте тенĕ пекех джинс шăлавар тăхăнса çÿреççĕ. Иккĕмĕш вырăнта – джемпер. Юрать, хăть ку тĕлĕшпе уйрăмлăхсем курăнкалаççĕ. Тĕрлĕ тĕслине, ÿкерчĕклине, расна мелпе çыхнине туянаççĕ. Çапах хутран-ситрен "пăлхавçăсем" тупăнкалаççĕ. Вĕсен стилĕ хăйне май теме çук. Ахăртнех, унашкаллисем тантăшĕсене тĕлĕнтересшĕн çеç. Апла пулин те студенкăсен хушшинче модăпа килĕшсе тăракан кĕпе тăхăнакансем, унпа çыхăнуллă алка-вăчăра суйлама пĕлекенсем пур. Ун пеккисене мухтас килет! Студентсем!!! Эсир çамрăк, сирĕн вăй-хăват тапса тăрать. Апла тăк ан ÿркенĕр, хăвăрăн стиле шырăр, ыттисенчен уйрăлса тăрăр...

### Профессор куçĕпе

**Владимир ВАСИЛЬЕВ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ:**

– Мускав патшалăх университечĕн юридици факультечĕн корпусĕ умĕнче вырăссен паллă юристне Анатолий Коние халалласа палăк лартнă. Унта çапла çырса хунă: "Çамрăк ăрăва пехиллесе вĕсен ăсĕпе чĕрине тискерлĕхпе ирсĕрлĕхрен сыхласа хăварас килет". Питĕ хăватлă шухăш! Паянхи студент çамрăк, ĕмĕтленме пĕлет, ăнтăлуллă. Вĕренекен çамрăксем лÿппер, кĕнеке вуламаççĕ тенине чылайăшĕнчен илтме пулать. Анчах студент Уйăх çинче пурăнмасть-çке. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчен вара пурнăç самай улшăнчĕ. Çавна мар, паллах, çынсем те урăхланаççĕ. Студент кĕнеке вуламанни унăн айăпĕ мар, унăн инкекĕ. Куншăн çамрăксем айăплă мар, пурнăç çапла хистет. Паянхи вĕренекене хурлама кăмăл та, сăлтав та çук. Интереслентерсен вĕсем питĕ талпăнуллă. Эпĕ техника енĕпе ăс пухакан студентсене вĕрентетĕп. Кунта Чул хуларан, Магнитогорскран тата ытти тăрăхран килнисем пĕлÿ илеççĕ. Вĕсем те "Чăваш культурин историйĕ" дисциплинăна килĕштереççĕ, рефератсене хăйсемех çыраççĕ. Ку – питĕ лайăх пулăм.

ИНТЕРЕСЛĔ!

**● Японири студентсем экзамена шăккалат йăтса кĕрессине йăлана кĕртнĕ. Çук, ку çамрăксем шăккалат пуçа лайăх ĕçлеттерет тенине ĕненнипе çыхăнман. Яппунсемшĕн "Kit Kat" шăккалат талисман вырăнĕнче. Яппун чĕлхинчи "kitto katsu" /мĕнле пулсан та çĕнтеретпĕрех/ сăмах майлашăвĕ "Kit Kat" шăккалат ячĕпе пĕр пекрех илтĕнет. Çавăнпах вĕсем ăна килĕштереççĕ.**

**● Шавлă пурнăça кăмăллакан студентсем занятисенче ыйхă пусса килнипе нушаланаççĕ-çке. Францири Нант хулинчи университетра ку ыйтăва хиврe сÿтсе явса йышăну тунă. Халĕ аслă шкулта сиеста валли ятарлă пÿлĕм пур. Студент кирек хăш вăхăтра та унта кĕрсе канма пултарать. "Ыйхă пÿлĕмĕнче" /çапла ят панă ăна/ хыттăн калаçма, кĕвĕ итлеме, ыталанма тата... чуп тума çеç юрамасть.**

**Кăларăма Дмитрий МОИСЕЕВ хатĕрленĕ.**

ТĔЛĔНМЕЛЛЕ!

# Санта-Клауспа пĕр ялтан

**Çĕнĕ çул уявĕ хыçа юлчĕ. Хĕл Мучисемпе Юр Пикесем хăйсен тумĕсене хыврĕç. Шупашкара волонтер мелĕпе килнĕ Йокко Култима финăн тăван хулинче вара çулталăк тăршшĕпех уяв, мĕншĕн тесен вăл Санта-Клаус ялĕнче пурăнать. Чăваш Ене килнĕ çамрăкпа паллашма васкарăм, вырăсла пĕлменскерпе акăлчанла пуплеме тиврĕ. Йокко – механик. Кивĕ машинăсене юсаса çĕнетет, тепĕр чухне вĕсен пайĕсенчен çĕннисене ăсталать. Ытларах чухне вăл сайра тĕл пулаканнисене юсама кăмăллать. Йокко шухăшĕпе – ку питĕ интереслĕ ĕç. Çак специалистăн куçĕ çивĕч, алли çирĕп пулмалла, тĕплĕ шухăшлама та пĕлмелле.**



– Эпĕ Чăваш Ене Финляндири Лапландирен килтĕм. Ку çĕршыври чи сивĕ Енонтекиĕ тăрăхĕнче çуралса ÿсрĕм. Ку муниципалитет коммуна шутне кĕрет. Сăмахран, халĕ унта сывлăш температури 52 градус сивĕ. Унта, 2012 çулхи çырав пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх, 1884 çын пурăнать. Енонтекиĕ Швеципе Норвеги хушшинче вырнаçнă. Ача чухне эпĕ çуралнă çуртран Швецин юхан шывĕпе вăрманĕсем курăнатчĕç. Çанталăк сивĕ пулнăран çынсем валли кунта ĕç çукрах. Ытларахăшĕ пăлан ĕрчетет, çавăнпах эпĕ те 2000 çулта Лапланди тĕп хулине Рованиемие куçрăм. Тепĕр майлă ăна «Санта-Клаус ялĕ» теççĕ. Çынсем ĕненнĕ тăрăх – Санта çакăнта çуралнă, пурăнать те. Рованиеми лаптăкĕпе пăхсан Европăри чи пысăк хула шутланать. Кунта 60 пин çын пурăнать. Эпĕ финн пулсан та Суоми халăхĕпе юнашар пурăннăран вĕсен чĕлхине те пĕлетĕп, – калаçу пуçарчĕ Йокко.

Лапландин тĕп хулине туристсем час-часах пырса çÿренĕрен урамсенче яланах халăх нумай иккен. Уйрăмах Çĕнĕ çул кацĕнче.

– Эпĕ праçникsене кăмăлласах каймастăп, çапах кăçал мана Раççейри икĕ ушкăн хăнана чĕнчĕ, çавăнпа вырăссем тата чăвашсем Çĕнĕ çула епле кĕтсе илнине курма телей пÿрчĕ. Волонтерсен ушкăнĕнче мана Хĕл Мучи тумне тăхăнтартрĕç. Туссем ку тивĕçе манăн кăна пурнăçлама ирĕк пур тесе шÿтлерĕç. Финляндире Раштава уявлаççĕ. Ăна «Йоулу» теççĕ. Çак сăмах нимĕç чĕлхинчен кĕнĕ. Ăна раштавăн 24-мĕшĕнче паллă тăватпăр. Финляндире ку çулталăкри чи пысăк уяв шутланать. Ăна çемьепе, çывăх тăвансемпе паллă тума йышăннă. Йоулупукки /Хĕл Мучи/ ачасемпе аслисене парнепе савăнтарать. Çĕнĕ çула уявласси çамрăксен хушшинче ытларах сарăлнă. Шупашкарти пек пысăк сĕтел хатĕрлеместпĕр, тÿпене фейерверк янипех çырлахатпăр. Çынсем тепĕр çул хăйсен пурнăçне улăштарма пĕр-пĕрин умĕнче сăмах параççĕ, анчах ăна чылай чухне тытаймаççĕ. Кунпа çыхăннă ваттисен сăмахĕ те пур финсен: «Пурнăçа улăштарма пĕлтĕр сăмах панăччĕ, кăçал вĕсем çухалчĕç», – калаçăва тăсрĕ каччă.

Çавăн пекех финн çамрăкĕсем пĕр пÿлĕме пухăнса тăхлан шăратаççĕ, çитес çул мĕн кĕтмеллине уйрăм палăрăсенчен пĕлеççĕ. Финляндири шкул ачисен раштавăн 24-мĕшĕнчен пуçласа кăрлачăн 6-мĕшĕччен – каникул. Аслисем те май пур чухне ĕçрен канаççĕ. Пĕчĕккисене хĕллехи уявра ытларах чухне шкул кутамкки, аслисене вара картина, хăйсен ячĕпе чей курки, шăккалат парнелеççĕ.

– Эпĕ Шупашкара юратрăм. Чăваш Енĕн тĕп хулине ман пек кашни волонтерах килĕштерет пулĕ. Кунти тавралăх илемĕ куçа илĕртет. Çуртсем пултаруллă архитекторсем пуррине кăтартаççĕ. Тăван çĕр-шывăмри архитектурасене кунтисен сĕнÿ-канашĕ çав тери кирлĕ пек туйăнать. Апатçимĕç питĕ тутлă, чăваш çыннисем ырă та ăслă. Эпĕ вырăс чĕлхипе культурине тĕпчемеверенме ĕмĕтленетĕп. Пуянах мар пулнипе ют çĕр-шывсене тухсах çÿрейместĕп, – чунне уçрĕ йĕкĕт.

30 çула çитмен çамрăксен Европăри çĕр-шывсене тата Раççее волонтер мелĕпе тÿлевсĕр çитме май пуррине пĕлсенех Йокко хăпартланнă. Волонтерăн сиенлĕ йăласемпе туслă пулмалла мар, хăйĕн çĕр-шывĕн чĕлхипе, культурипе ыттисене паллаштарма пĕлмелле, анчах çакăншăн укçа тÿлемеççĕ.

– Ку çул çÿрев маншăн тавра курăма пуянлатмалли мел. Ыйту çырсан Чул хуларан, Самартан, Камчаткăран, Воронежран тата Шупашкартан пĕрне суйламалла пулчĕ, эпĕ Чăваш Енĕн тĕп хулине килтĕм. Çакăншăн пĕрре те ÿкĕнместĕп. Чăваш Енре те, Хусанпа Мускавра та хам валли юлташсем тупрăм. Вĕсем пурте Европа союзĕн волонтерĕсем, Чĕлхе фестивальне хутшăнаççĕ, хăшĕ-пĕри Ростовра вĕренет. Шупашкарта эпĕ акăлчан чĕлхине ăса хывакансене унпа куллен усă курма хăнăхтаратăп. Çавăн пекех чĕлхепе çыхăннă тĕрлĕ проекта хутшăнтăм. «Хавал» лагере, XVIII чĕлхе фестивалĕнче суоми тата финн чĕлхисемпе паллаштартăм. Студентсемпе шкулта вĕренекенсене финн чĕлхине ăса хывма пулăшатăп. Шупашкара килнĕ ытти волонтер та ăна хавасрах вĕренет. Çакăн валли Мускавра ятарласа кĕнеке те туянтăм. Вăл манăн ĕçе чылай çăмăллатать, – калаçăва вĕçлерĕ çамрăк.

**Алена АЛТУХОВА.**

СПЕЦИАЛИСТПА КАНАШЛАТПĂР

# Çĕр налукĕ тÿлемелле-и?

**Манăн упăшка I ушкăн инвалидĕ. Пирĕн шкулта вĕренекен 15 çулти ача пур. Уйри çĕр пайĕшĕн эпир кашни çул налук тÿлетпĕр. Калăр-ха, тархасшăн: пачах ĕçлеймен мăшăрăмăн çав налука тÿлемеллех-ши? Тата унран кама хăтараççĕ? Транспорт налукĕ çук. Налук ĕçченĕсем çĕршĕн укçа илсе тĕрĕс тăваççĕ-и?**

**ЕЛИЗАВЕТА.**
Етĕрне хули.

Федерацин налук службин Чăваш Енри управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх – сирĕн РФ Çĕр кодексĕн 391-мĕш статйине тишкермелле. Уйрăмах унăн 5-мĕш тата 7-мĕш пунктĕсене пăхмалла. Налук ĕçченĕсем каланинчен – çĕр хуçин налук бази 10 пин тенкĕрен пĕчĕкрех тĕк /çĕр пайĕн налукĕ чылай чухне пĕчĕк/ ăна тÿлемелле мар. Çак çăмăллăхпа граждансен хăш-пĕр категорийĕпе пĕрлех I ушкăн инвалидĕсем те усă кураççĕ. Сирĕн çул çитмен ача пурри нимĕнле витĕм те кÿмест. Хисеплĕ Елизавета, управлени ĕçченĕсем сире вырăнти налук службине тепĕр хут кайса калаçма сĕнеççĕ. Тен, кирлĕ документсене эсир пĕтĕмпех пухман?

# Гороскоп

**Кăрлач, 27-нарăс, 2**



**Сурăх.** Чуна кăшлакан вак-тĕвек ыйтусене шута илмесен ăнăçлă эрне. Автомашина çĕмĕрĕлес тата килти йăла техники юрăхсăра тухас хăрушлăх пур. Ĕçĕрте йăлтах йĕркеллĕ мар-и? Ан пăшăрханăр: ку сире туйăнать çеç. Канмалли кунсене çывăх çыннăрсемпе irttерме тăрăшăр – çăлтăрсем çапла сĕнеççĕ.



**Вăкăр.** Кăмăл пусăрăнчăк-и? Пĕр ĕç патне те алă пымасть-и? Лару-тăрăва тĕпрен улăштарас килет-и? Тăраниччен çывăрма, эрнере тумалли ĕçсене палăртма, шанчăклă юлташăрсемпе тĕл пулса пăшăрхантаракан ыйтусене сÿтсе явма май килĕ. Унсăр пуçне ырă хыпар пĕлтерĕç. Анчах, шел те, шăнса пăсăлас хăрушлăх пур – эрне кунпа шăмат кун хулăн тăхăнăр.



**Йĕкĕреш.** Кăмăлăр лайăхланĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Юлташăр умĕнчи парăма тататăр, сире ăмсанакан ĕçтешĕр отпуска кайĕ, кил-тĕрĕшри кирлĕ мар ăпăр-тапăра кăларса ывăтатăр. Начарланас шухăшлисем вара диетăна пăхăнма пуçлĕç – ан иккĕленĕр: усси пулатех. Канмалли кунсенче усă сывлăшпа киленме май тупăр.



**Рак.** Ĕçтешĕрсемпе, тусăрсемпе çыхăннă ыйтусене хыпаланса ан хуравлăр. Çул-йĕр çинче асăрханулла пулăр: светофорăн симĕс çутине кĕтĕр. Савнийĕре /мăшăрăра/ анваскатăр – чунĕнче мĕн капланнине вăхăт çитсен хăех уçса парĕ. Канмалли кунсенче аçăр-аннĕре кил-тĕрĕшре пулăшма тăрăшăр.



**Арăслан.** Зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çуралнисем тавра курăма аталантарасшăн, чиперленесшĕн. Çавăнпах илем салонне çул тытĕç, психологран сĕнÿ-канаш ыйтĕç, стоматолог патне кĕрсе тухĕç, пĕр-пĕр курса çырăнĕç. Йывăрлăха лекнĕ тăванăрсене канмалли кунсенче пулăшма май тупăр.



**Хĕр.** Эрне пуçламăшĕнчех почтăна тахçантанпах кĕтнĕ посылкăна илме каятăр, каярахпа аякри тăванăрсене хыпар пĕлтермешкĕн телеграмма ямалла пулĕ. Эрне вĕçĕнче кредитпа çыхăннă парăма татма тăрăшăр – кайран укçа тăкакламалли сăлтавсем татах тупăнĕç.



**Тараса.** Кил-тĕрĕшре аппаланса киленĕç тупатăр. Диван-кравате, сĕтел-пукана, йăла техникине ăста лартасси-куçарасси пирки çывăх çыннăрсемпе, юлташăрсемпе канашлатăр. Ятарлă лавккасене çитсе çĕннисене суйлатăр. Вырсарни кун вара килçуртра тирпейлетĕр.



**Скорпион.** Пурте пĕр харăссăн: "Сирĕн шухăшăр тĕрĕс", – тесен те пуça касăртни, кăкăр çапни вырăнсăр. Ĕçтешĕрсем, ахăртнех, тĕрĕссине каламa шикленеççĕ, çывăх çыннăр хурлантарасшăн мар, юлташăрсем вара мĕн пирки сăмах пынине ăнкармаççĕ те. Унсăр пуçне шăнман пăр çине ларса юласран асăрханăр.



**Ухăçă.** Вăхăта юлташăрсемпе пĕрле irttеретĕр: кинотеатра каятăр, пĕр-пĕр куравпа киленетĕр... Хăшĕ-пĕри хăнана çул тытĕ е хăй йыхравлĕ. Тусăрсенчен вăл е ку ыйтупа канаш ыйтма тивĕ /чи лайăх сĕнĕве эрне кун парĕç/, вĕсем пулăшу ыйтсан та – ан хирĕçлĕр.



**Ту качаки.** Ĕçре йăлтах пыл та çу. Çемьере вара, шел те, лару-тăру çăмăл мар. Ачăрсем ыйтăвĕсен хуравне тупма пулăшманшăн кăмăлсăрланĕç, мăшăрăр /савнийĕр/ хăйĕн сĕнĕвне шута илменшĕн вĕчĕрхенĕ, аçăр-аннĕр кил хуçалăхра пулăшманшăн сăмахлĕ...



**Шыв тăкан.** Шыв тăкансем куравсене, музейсене çÿресе тавра курăма пуянлатĕç, юлташĕсемпе ресторана кайĕç. Унсăр пуçне юратнă çынни тĕл пулăва йыхравлĕ. Çапах çăлтăрсем асăрханулла пулма сĕнеççĕ – пĕлĕшĕр савнине тем пирки евитлес хăрушлăх пур.



**Пулăсем.** Эсир ывăннă, анчах канма май тупаймастăр – ĕç нумай. Хăвăра алла илĕр, ан пăшăрханăр. Çитес эрнере йăлтах манса диван çинче выртмашкăн вăхăт тупăнĕ. Халĕ вара пуç çĕклемесĕр ĕçлĕр, пусăннă проектсене вĕçлĕр. Пулăшу кирлĕ тĕк ĕçтешĕрсене ÿкĕтлĕр.



## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 24.01 | – 20 | – 26 |
| 25.01 | – 24 | – 25 |
| 26.01 | – 23 | – 24 |
| 27.01 | – 18 | – 26 |
| 28.01 | – 24 | – 28 |
| 29.01 | – 27 | – 32 |
| 30.01 | – 27 | – 28 |

# Юратупа



## Ёлĕкхи савни усал сунчĕ те...

Сергейпа шкулта чухнех хĕрпе каччăлла çӳреттĕмĕр. Эпĕ университет пĕтеричченех унăн ашшĕ-амăшĕ патĕнче пурăнтăмăр. Юлташсем пире пĕрлешмесĕрех упăшкипе арăмĕ вырăнне хуратчĕç. Пирĕн хушăра вăрçă-харçă тухман, эпир пĕр-пĕрне ялан пулăшаттăмăр. Аслă пĕлӳ илсен ăна çара илчĕç. Телефонпа каçхине сехечĕ-сехечĕпе калаçаттăмăр. Вăл салтакран килсенех туй кĕрлеттерессе, эпир чăн-чăн çемье чăмăртасса шантăм.

Сергей таврăнсан малтанах туй валли укçа ĕçлесе илес тĕллевпе ялти çамрăксемпе Мускава тухса кайрĕ. Пирĕн ял хĕрĕсем те вĕсемпе пĕрле штукатур-малярта ĕçлетчĕç. Эпĕ хамăн специальноçпа кунтах ĕç тупрăм, пилĕк çул ăс пухни сая ан кайтăр терĕм... Анчах Сергей çур çул шапаша çӳренĕ хыççăн та качча тухма ыйтмарĕ. Пачах урăхла хыпар илтрĕм. Вăл пиччĕшĕн арăмĕн тăванне Маринăна килĕштернĕ иккен. Пике те – штукатур. Вăл Сергея тахçанах килĕштернĕ. Мускавра эпĕ çуккипе усă курса каччăна илĕртмеллипех илĕртнĕ: пĕрле вырăн пайланă. Маринăн çие юлнă. Çапла Сергейăн мана мар, ăна качча илме тиврĕ.

Хама тĕнчери чи телейсĕр çын тесе шухăшлаттăм. Çак ултав маншăн çурăмран çĕçĕпе чикнĕ пек туйăнчĕ. Юрать, тăвансемпе юлташсем юнашар пулчĕç. Сергей çапла хăтланнине нумайăшĕ тиркерĕ. Эпĕ вара ăна ăнланма, каçарма тăрăшрăм. Çичĕ çул пĕрле çӳренĕ, юратнă, салтакран кĕтнĕ çынна пĕр самантрах епле манăн? Ку ултавпа малалла епле пурăнмалла? Тепĕр çынна епле шанмалла?..

Пулас мăшăрămпа юлташ хĕрĕн туйĕнче паллашрăм. Эпĕ хĕр çумĕ пултăм, вăл вара качча каяканăн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ. Унăн сăнне ас туса та юлаймарăм, вăл вара мана пĕрре курсах килĕштернĕ. Çакăн çинчен тусăм шăнкăравласа каларĕ, Денис ман номере ыйтнине пĕлтерчĕ. Эпĕ хирĕçлемерĕм. Каччă çав кунах шăнкăравларĕ, хулара уçăлса çӳреме машинăпа лартса кайрĕ. Вăл мана сăнĕпе килĕшмерĕ пулин те туслăха аркатмарăм. Денис манăн кăмăла çавăрас тесе нимĕн те шеллемерĕ, кафесене, кинотеатрсене илсе çӳрерĕ, чаплă парнепе савăнтарчĕ. Мансăр пĕр кун та пурăнаймассине пĕлтерчĕ. Виçĕ уйăхранах мăшăрĕ пулма ыйтрĕ. Нумай ӳкĕтлеттермерĕм. Пĕр эрне шухăшланă хыççăн качча тухма килĕшрĕм. Пулас мăшăрăм туй салонĕнчи чи хаклă кĕпене туянчĕ, парикмахера киле чĕнтерсе чаплă прическа тутарттарчĕ. Хăй вара мана илме лимузинпах килчĕ. Хăнасем хаваслăн юрларĕç те ташларĕç, ĕçрĕç те çирĕç. Эпĕ вара мăшăрлану керменне кĕриччен те, унтан тухсан та: «Тĕрĕс турăм-ши?» – тесе иккĕлентĕм.. Пĕрремĕш юратăвăм Сергей асран тухмарĕ. Дениспа пурăнма пуçласан та яланах ăна аса илеттĕм...

Çулталăкран пирĕн ача çуралчĕ. Хĕрĕмĕре çав тери юратрăмăр. Мăшăрăм ĕçрен таврăнмассерен ăна алла илсе сиктеретчĕ, ачашласа çупăрлатчĕ. Шăкăл-шăкăл пурăнаттăмăр-ха... Пĕррехинче телефона шăнкăравларĕç. Палланă номере курсан хытса тăтăм. Сергей... Ёлĕкхи савни виçĕ хут шăнкăравласан та телефона тытмарăм. Тепĕр кунхине те Сергей хăпмарĕ, Денис ĕçре пулнипе усă курса унпа калаçрăм. Арçын мана манманнине, арăмĕпе япăх пурăннине пĕлтерчĕ. Хăйĕнпе тĕл пулма ӳкĕтлерĕ. Килĕшмерĕм. Вăл пур пĕрех манран хăпмарĕ. Ачампа паркра уçăлса çӳренĕ чухне мана асăрхарĕ. Суймастăп: ăна курсан чĕрем ирĕлчĕ. Пирĕн туслăха, юратăва тата... ултава аса илтĕм. Сергей арăмĕпе икĕ çул пурăнса та телей тупайман. Халĕ уйрăм пурăнаççĕ. Арçын мана юратнине пĕлтерчĕ, упăшкана пăрахса ун патне куçма ӳкĕтлерĕ. Эпĕ хирĕçлесен Сергей мăшăрăма усал сунчĕ. Пире çынсем ан курччăр тесе тата Денис часах ĕçрен таврăнасса пĕлсе хваттере кĕтĕм.

Упăшкам киле пĕрремĕш хут кăмăлсăр таврăнчĕ. Ăна ĕçре пĕчĕкрех должноçа куçарса шалăвне пĕчĕклетнĕ иккен. Тата ăна «ырă çынсем» эпĕ паркра ют арçынпа калаçса тăнине евитленĕ. Мăшăрăма Сергейпа ăнсăртран курнăçни тата вăл мĕн калани пирки уççăн пĕлтертĕм. Денис сăнран улшăнчĕ, анчах нимĕн те каламарĕ. Çак каç тухса кайрĕ те киле çывăрма таврăнмарĕ. Ир енне çеç ӳсĕр килчĕ. Пĕрремĕш хут харкашрăмăр, çапах упăшкана сивĕ шывпа çăвăнтарса урăлтартăм. Ĕçе тухса утиччен ăна вĕри апатпа сăйларăм. Общежитири пĕчĕк пӳлĕмре виççĕмĕре хĕсĕк пулнăран Дениса пысăкрах шалуллă ĕçе вырнаçма ӳкĕтлерĕм. Вăл ман çине ăшшăн пăхрĕ те алăкран тухрĕ. Çав кунранпа урăх килмерĕ. Вăл аварие çакланнине, кăштахран чĕри тапма чарăннине больницăран шăнкăравласа пĕлтерчĕç...

Хуняма килĕнче усал сăмах хăвăрт сарăлчĕ. Эпĕ малтанхи савнипе тĕл пулнине, упăшкама урăххипе «улталанине» сӳтсе яврĕç. Тĕрĕссине никам та тĕпчемерĕ, мана айăпларĕç çеç. Мăшăра пытарнă чухне те ман çине ӳпкевлĕн пăхрĕç. Çири кĕпене кĕске тесе тиркерĕç. Асăнмалли кунсенче те хуняма патне кайма хăраттăм, мĕншĕн тесен манăн кашни хусканăва тиркетчĕç. Эпĕ упăшкана юлашки çула ăсатнăшăн савăнатăп иккен, малтанхи савнипе пурăнма пуçлăп имĕш. Çав сăмахсене ним тума аптăранипе илтмĕш тăваттăм.

Унтанпа икĕ çул иртрĕ, нимĕнле савни патне те каймарăм. Упăшкасăр пуçне никам та кирлĕ мар мана. Общежитирех пурăнатпăр. Тепĕр чухне кăшкăрса макăрас килет, май пулнă тăк мăшăрăм патне тӳпене вĕçсе хăпарăттăм. Кирлĕ пулсан çĕр тĕпне те анăттăм. Анчах çук çынна нимĕнпе те тавăраймăн... Дениса юлашки хут курнă куна аса илетĕп те шухăшлатăп: «Общежитире виççĕмĕре хĕсĕк тесе мĕншĕн каларăм-ши? Шуйттанĕ çапла хĕтĕртрĕ-ши?» Пурăннă чухне мĕн пуррине хакламалла, лайăххине хапсăнса çумрине çухатасран асăрханмалла. Ашшĕне хунă пĕчĕк хĕрĕме ыталатăп та Дениса аса илетĕп. «Акă манăн пурнăç тĕллевĕ», – тесе хама малалла пурăнма хавхалантаратăп.

**АРИНА.**

/Районне палăртман/.

ШĂПА

# Ывăлăмăра çурçĕрте хăвартăмăр

Салам, «Çамрăксен хаçачĕ» тата унăн тусĕсем. Хĕлле ялта ĕç сахаллипе хаçат вулама та, çыру шăрçалама та вăхăт пур. Çур ĕмĕр хыçа юлчĕ, çавăнпа манăн аса илсе каласа памалли нумай.

Аттепе анне, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем, вунă çул каяллах çĕре кĕчĕç. Пичче ĕçке пула сарăмсăр вилчĕ. Юрать, аппасем пур. Машăрăмпа çулталăк каялла çурçĕртен куçса килтĕмĕр. Унта епле лекнĕ тетĕр-и? Вăтам шкул пĕтерсен чухăн пурăннипе аслă пĕлӳ илме май килмерĕ. Тантăш хĕрсемпе завода вырнаçрăмăр, токаре вĕрентĕмĕр. Пурăнма общежитие вырнаçтарчĕç. Çавăнтах пĕр каччăпа паллашрăм. Вăл ташă каçĕнче ман пата пычĕ те вальс кĕввипе çаврăнма чĕнчĕ. Каярахпа Саша ĕçре мар, ĕçкĕре маттуррине асăрхарăм. Çур çĕр иртсен те пӳлĕм алăкне шаккатчĕ. Эпĕ хĕрсенчен аван марланаттăм. Анчах путсĕр каччăран хăпма çăмăл пулмарĕ. Вăл мана ĕçе каяс умĕн те, заводра та, каялла таврăннă чухне те канăç памарĕ. Тĕрĕссипе, хам та ăна кăшт килĕштереттĕм. Анчах юлташсем те, тăвансем те Сашăна пăрахма, урăх ĕçе вырнаçма сĕнчĕç.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче çамрăксенчен нумайăшĕ çурçĕре çул тытрĕ. Эпĕ те пĕр хĕрпе Сургута тухса кайрăм. Консерв заводне вырнаçрăмăр, общежитире пурăнтăмăр. Сургутри хĕл Чăваш Енринчен чылай сивĕ. Урама уçăлма тухмастăмăр, пушă вăхăта пӳлĕмре ларсах ирттереттĕмĕр. Çав общежитире çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пуçтараннă çамрăксем пурăнатчĕç. Пурте заводра ĕçлетчĕç. Çăмăлах марччĕ пире, çапах тӳсрĕмĕр. Иккĕмĕш кунхинех, каç кӳлĕм, пирĕн пӳлĕм алăкне шаккарĕç. Кӳршĕре пурăнакан яшсем хăнана кĕртме ыйтрĕç. Хирĕçлемерĕмĕр. Шӳтлесе кулнă вăхăтра каччăсенчен пĕри Андрей ман çине ăшшăн пăхнине асăрхарăм. Эпĕ те ăна хирĕç йăл култăм. Çĕрлечченех картла вылярăмăр. Çапла Андрейпа паллашрăм. Вăл кăнтăр енчен пынăччĕ. Каччă манран кăшт кĕçĕнрех пулин те калаçу сыпăнатчĕ.

Икĕ эрнеренех Андрейпа ЗАГСа кайса ыйту çыртăмăр. Туя общежитири ĕçтешсемпе уявларăмăр. Шурă кĕпе тăхăнмасăрах качча тухрăм. Пĕр пӳлĕмре пурăнма тытăнтăмăр. Андрей моряк пулнă май çур çултан ишеве тухса кайрĕ. Манăн çие юлнăччĕ. Упăшкам тинĕсре çур çул çӳрерĕ. Вăл каялла çаврăнса çитсен шăп та лăп хăйĕн çуралнă кунĕнче ывăл çуралчĕ. Лайăх пурăнаттăмăр, пĕр-пĕрне ăнланса шăкăл-шăкăл калаçаттăмăр. Упăшка кашнинчех ишеве ултă уйăхлăха çӳретчĕ, эпĕ ача пăхса пурăнтăм. Пурăна киле икĕ пӳлĕмлĕ хваттер те, автомобиль те туянтăмăр. Пилĕк çулта пĕрре çуралнă тăрăхсене хăнана каяттăмăр. Пĕччен пулнăран тата ашшĕ инçете час-часах кайнăран ывăл ачашрах çитĕнчĕ. Эпĕ заводран тухрăм. Малтан ача садĕнчи, ывăл шкула кайсан унти столовăйра ĕçлерĕм. Ывăл шкул пĕтерсен куçăн мар майпа юриста вĕренчĕ, пушă вăхăтра ĕçлерĕ. Килте сайра хутра кăна курăнкаларĕ. Манăн пушă вăхăт нумайланчĕ. Çулла кăмпана çӳреттĕм, ăна хĕл валли тăварлаттăм. Сургутри лавккасенчи апатçимĕç, Чăваш Енрипе танлаштарсан, çав тери хаклă. Пĕр сусăра пăхма пуçларăм. Ĕçре аманнăскер утаймастчĕ. Нихăçан та авланманскерĕн тăванĕсем те çукчĕ, пĕр пӳлĕмлĕ хваттерте пĕччenех выртса тăратчĕ. Пурнăçра нумай нуша тӳснĕ çынна лавккаран тавар илсе пырса параттăм, апат пĕçерсе çитереттĕм, кĕпе-йĕмне çуса якататтăм. Арçын мана тав сăмахĕ каласа укçа паратчĕ. Çапах чир шала кайнипе нумаях пурăнаймарĕ, ăна пĕлĕшсемпе пĕрле пытартăмăр. Пĕррехинче ман пата нотариус шăнкăравларĕ. Эпĕ пăхса пурăннă çын хваттерне ман çине çырса хăварнине пĕлтерчĕ. Икĕ хваттерлĕ пултăм, анчах чылай чухне эпĕ пĕчченччĕ.

Упăшка ишеврен килсен виççĕмĕр пĕрле Çĕнĕ çула уявларăмăр. Ывăлăм пĕр хĕрарăма юратнине, часах авланассине пĕлтерчĕ. Эпир тĕлĕннипе çăвар карса пăрахрăмăр. Ывăлăмăр упăшкинчен уйрăлнă икĕ ачаллă Иринăпа кафере паллашнă иккен. Андрейпа пĕр-пĕрин çине пăхрăмăр та ним калама аптăрарăмăр. Ачамăра ăса кĕме ӳкĕтлерĕмĕр. Вăл пире итлес вырăнне çав каçах Ирина патне тухса кайрĕ. Ывăлăма епле тавăрасси çинчен пуç ватрăмăр. Чăваш Ене пуçĕпех пурăнма куçма, çирĕм çул пухнă пурлăха сутса ăна пĕрле илсе кайма тĕллев лартрăмăр. Ашшĕ ывăлне телефонпа ятларĕ, нимсĕр хăвармассипе хăратрĕ. Ирина та парăнмарĕ, савнине пысăк автомашина илсе парассипе илĕртрĕ... Çапла Андрейпа иксĕмĕрех Чăваш Ене килтĕмĕр. Иртнĕ пурнăçа тата ывăлăмăра унта хăвартăмăр.

Халĕ тăван ялта пурăнатпăр. Ют çĕре тухса кайса аттепе аннене те пытараймарăмăр. Упăшка та тăванĕсене тăтăш кураймарĕ. Халĕ пĕр-пĕринсĕр пурăнаймастпăр эпир. Эпĕ унран ниçта та юлмăп, мĕншĕн тесен арăмĕн упăшкипе пĕрлех пурăнмалла. Акă нумаях пулмасть ывăлăм арăмĕпе тата унăн ачисемпе килсе кайрĕç. Вăл аслă, хăйĕнне хăех пĕлет. Эпир ăна каçартăмăр, вăл та çилĕ тытмасть. Çапларах иртет манăн пурнăçăм.

**СВЕТЛАНА.**

ЧУНРИ

# Ăна эпĕ мар, пичче качча илчĕ

Ырă кун пултăр «Çамрăксен хаçачĕ» тата унăн тусĕсем. Анне чăваш хаçачĕсенчен «Çамрăксен хаçатне» ытларах кăмăллать. Эпĕ те «Юратупа наркăмăшри» çырусене вулатăп. Халĕ ав хам та алла ручка тытрăм.

Виçĕ ачаллă туслă çемьере ӳсрĕм. Ывăлсенчен чи кĕçĕнни пулнăран аттепе анне мана ытларах юратрĕç. Чи тутлă çимĕç мана лекетчĕ. Пурте юратнăран иртĕхрĕм ахăр. Тĕнчери мĕн пур япала ман валли тесе шухăшлаттăм. Шкулта вăтам классенче вĕреннĕ чухне Дашăна килĕштертĕм. Вăл лайăх вĕренетчĕ. Класри пур арçын ача та ăна килĕштернĕрен кĕвĕçеттĕм. Хăшĕпĕринпе çапăçма та тивнĕччĕ. Пĕррехинче математикăпа килти ĕçе тума маннăран Дашăран çырса илтĕм. Ытти арçын ача та çапла тунине пĕлсен тарăхрăм. Вĕрентекен ĕçсене тĕрĕслерĕ те манран: «Камран çырса илтĕн?» – тесе ыйтрĕ. Эпĕ ним пытармасăрах хуравларăм: «Даша Ивановăран». Пĕтĕм класс ман çине тĕлĕнсе пăхрĕ, айăпа кĕнĕ хĕр ача вара хĕрелсе кайрĕ. Вĕрентекен: «Тĕрĕс мар çырса илнĕшĕн сана – «виççĕ», Дашăна вара ыттисене тĕрĕс мар ĕçе çырса илме панăшăн – «иккĕ», – терĕ. Çав кунран хĕр ача хăйĕнчен никама та çырса илме ирĕк памарĕ. Çакăншăн савăнтăм çеç. Дашăна шкул пĕтеричченех килĕштертĕм, ялан ун хыççăн чупрăм. Вăл вара ман çине çаврăнса та пăхмастчĕ, ялан хирĕçлетчĕ. Ун валли ятарласа илнĕ шăккалата йышăнмастчĕ, сумкине вăрттăн хураттăм, тепĕр кунхине ăна каялла паратчĕ. Пĕтĕм класс умĕнчех намăслантаратчĕ.

Шкул пĕтерсен Даша кулинари училищине çул тытрĕ. Эпĕ те унран юлмарăм. Хĕрпе пĕр ушкăнра повара вĕрентĕм. Çапах Даша манпа юлташла çеç калаçатчĕ. Вĕренсе пĕтермесĕрех, çур çултан, салтак атти тăхăнтăм. Тинĕс флотĕн çарне лекрĕм. Ишеве тухма çав тери кăмăллатăп. Тинĕс хумĕсене курсан чĕре савăнăçлăн тапать. Дашăна тĕл пулсан та чĕре çаплах пăлханатчĕ. Çулталăк çурăран çартан таврăнтăм. Пичче авланассине пĕлтерчĕ. Дашăна качча илет иккен. Çакна илтсен пике пирĕн çемьене лекнĕшĕн савăнтăм. Апла вăл юнашарах. Анчах килĕшнĕ чиперкке пиччен арăмĕ пулнăшăн хурлантăм. Туя колхоз столовăйĕнче уявларăмăр. Хăнасем 200-ĕн пухăнчĕç. Шăлавар, пушмак, Дашăнни пекех шапшурă кĕпе тăхăнтăм. Хама авланмастăп тесе тупа турăм. Туйра пĕр хĕрпе паллашрăм, унпа Даша умĕнче хĕрӳллĕн ташларăм, кашни конкурса хутшăнтăм.

Халĕ пиччесем иккĕшĕ те мăшăрлă. Тĕп килтен уйрăлса тухрĕç. Асли кӳршĕ ялта çурт çĕклерĕ, тепри хулара ипотека мелĕпе хваттер туянчĕ. Даша ача кĕтет, апла пулин те ăна вăрттăн килĕштеретĕп. Чĕрене çунтараканскере манас тесе нумай хĕр пуçне çавăртăм, хăшĕпĕринпе пурăнса та пăхрăм, анчах нихăшĕнпе те çемье çавăрас килмест. Халĕ атте-аннепе ялта пурăнатăп. Хамăн автомашина пур. Унпа хулана ĕçе çӳретĕп. Чăн-чăннипех юратмасăр хусах пурнăçпа сыв пуллашмастăпах.

**С.Г.**
/Районне палăртман/.



РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

# Упăшка тупасчĕ, анчах ăçта?

Хаçата çыру çыратăп тесе нихăçан та шухăшламан. Ăнсăртран, анне патне яла килсен, алла «Çамрăксен хаçачĕ» лексен «Юратупа наркăмăшри» çырусемпе паллашса тĕлĕнеттĕм. Ăссăр хĕрхĕрарăм теттĕм: ĕç çук-ши вĕсен? Пусăрăнчăк кăмăла «тĕнчене» пĕлтермесĕрех кама та пулин уçма пулать-çке. Акă вĕсен шăпи хам ума çитрĕ. Халĕ ялта пурăнатăп. Хаçатпа çывăх туслашрăм. Эрнере пĕрре кăна тухнăран чăтăмсăррăн кĕтетĕп ăна. Икĕ яла пĕр почтальон пулнăран эрне кунах валеçме ĕлкĕрейменни те пулкалать. Хăш-пĕр чухне эрне кун кĕтсе илеймесен ниçта кайса кĕрейместĕп. Суймастăп: ăна çав тери вулас килет. Пĕтĕм ĕçе пăрахса чи малтан çырусемпе паллашатăп. Пĕрин мăшăрĕ апат тиркет иккен, теприн юттисем патне чупать, виççĕмĕшĕн – кĕвĕç. Манăн çумра вара нихăшĕ те çук. Турра мĕнпе кӳрентертĕм-ши?



Ачалăхăм телейлĕ иртрĕ. Атте-анне мĕн ыйтнине йăлтах туянса паратчĕ. Пичче мотоциклпа чупма вĕрентсен хама ятăн çĕннине парнелерĕç. 8-9-мĕш классенче вĕреннĕ чухне çӳçе кăтралатма, куç харшине сăрлама тытăнтăм. Хитре тумпа каччăсене илĕртес шухăш вăранчĕ. Çĕнĕ модăпа килĕшсе тăракан япалана юлташăмсенчен чи малтан эпĕ çакса яраттăм. Юнашар ял каччи Владик ăшă кăмăллăн пăхни, манпа пуплеме сăлтав шырани хам сисмесĕрех чĕремре юрату туйăмне вăратрĕ. Вĕренӳре аванах ĕлкĕрсе пыраттăм. Владикпе пӳрт умĕнчи хапха юпине «тĕреклеме» тытăнсан «3» паллă çине куçрăм. Анне пиччепе иксĕмĕре çапма мар, пирĕн çине сасă хăпартса та курман. Чун варли час-часах чĕрĕ чечек çыххипе савăнтаратчĕ. Клубра та пĕр-пĕринчен уйрăлмастăмăр. Пирĕн хушша никам та кĕме хăяймастчĕ. Телейлĕччĕ эпир. 10-мĕш класа куçсан Владике салтака ăсатрăм. Ыран ăсату каçĕ тенĕ чухне савнийĕм /халь ăна ырă çак сăмаха калас та килмест/ пирĕн пӳрт умне иртерех çитсе мана ши! шăхăрса чĕнчĕ. Пăлханчĕ вăл, икĕ çул кĕтме ыйтрĕ. Эпĕ, никама та ăна юратнă пек савса курманскер, паллах, килĕшрĕм, унăн кăкăрĕ çине пуçа тайса йĕтĕм. Уçăлса çӳренĕçемĕн клуб умне çитсе чарăнтăмăр. Çав кун клуб хупăччĕ, вăл ăна уçрĕ те шала кĕтĕмĕр /Владик юлташĕ клубра ĕçлетчĕ/. Çавăнта эпĕ, хĕр пурнăçĕнче пĕрремĕш хут юратса курнăскер, хаклă çыннăма хĕрлĕхе парнелерĕм...

Кунсем иртрĕç, Владикпе çырусем урлă йăпантăмăр. Вĕренӳ пĕрремĕш вырăнта марччĕ. Юратнă çын юнашар пулсан пурнăç ăнать пек туйăнатчĕ. Хĕр тантăшсене те асăрхамарăм, хам çине ăшшăн пăхакан каччăсене те сивлерĕм. Владик килсенех качча илесси, çемье пурнăçĕ пуçланасси пирки ĕмĕтлентĕм. Пирĕн ялта манпа пĕр ятлă хĕр пурччĕ. 14 çултах пирус мăкăрлантаратчĕ, эрехсăрапа туслăччĕ. Каччăсене алăри перчетке пек улăштаратчĕ. Çав хĕр çинчен япăх сăмах сарăлни Владиксен ялĕнчи унăн тăванĕн хăлхине те кĕнĕмĕн. Тахăшĕ вара пире аташтарса савнийĕме эпĕ «пăсăлнă» тесе çырса пĕлтернĕ. Унăн салтак аттине хывасси шутлă кунсем юлнăччĕ. Манăн юлашки çырăвăм çине уринчи аттипе таптаса йĕр туса ярса пани юратăва вараларĕ. Хĕсметрен таврăнсан манпа курнăçма тăрăшмарĕ вăл. Пирĕн çулсем уйрăлчĕç. Юлташĕсен умĕнче ман пирки «вăл текех таса хĕр мар» тесе каласран шиклентĕм.

Эпĕ хама алла илсе хулана куçрăм. Куславккара çуралса ӳснĕ пĕр каччăпа паллашрăм. Пĕрле чылай пурăнтăмăр. Вăл мана юратнине сисеттĕм, анчах çав тери кĕвĕçчĕ. Епле кĕвĕçмĕн-ха? Хитре урана кĕске юбка тăхăнса кăтартса çӳреттĕм. Илемлĕ кăкăр, çинçе пилĕк чылай арçынна ăсран кăлараççĕ.

Вăтăра çывхариччен Кольăна ывăл парнелерĕм. Вăл çав тери савăннине кураттăм: пепкем валли хаклă теттесем, илемлĕ нумай тумтир туянатчĕ. Анчах тăтăш харкашкалама тытăнтăмăр. Сăлтавĕ вăл кĕвĕçниччĕ. Хăнана кайсан та, урама тухсан та ялан арçынсем ман çине пăхни унăн кăмăлне пăсатчĕ. Пĕррехинче вара çапăççах кайрăмăр. Коля хăйне тытса чараймасăр ман çине алă çĕклерĕ. Тепĕр кунхине ача япалисене пуçтартăм та тĕпренчĕкĕмпе автобуса ларса яла вĕçтертĕмĕр. Аттепе аннене мĕн пулса иртни пирки пĕр сăмах суймасăр каларăм. Пирĕн ытлашши хĕр çук тесе мана текех Коля патне ямарĕç. Çав кунранпа ялта пурăнатăп. Ывăлăм 3-мĕш класа çӳрет. Анчах тулли телейĕме курмастăп. Атте-аннене сивĕ сăмах каласа кӳрентересрен ялан асăрханатăп. Çапах та «Качча кайнă хĕр киле каялла килесрен хăраса алăк патĕнче шăпăр та чĕтресе тăнă» тени ахаль сăмах марах. Ĕмĕре иртерме юнашар арçын тупас килет те, «качакана качча каяс çук çав». Хаçатри пĕлтерӳсемпе çыхăнса пăхрăм та ăнмарĕ. Клуба тухса çӳреме текех 18 çулта мар. Килте ларсах шурă лаша утланнă принца кĕтсе илеймĕп. «Арçынсăр хĕрарăма упа та хăратнă» тет те – ăçта тупмалла-ши ăна, этемлĕхĕн вăйлă çуррине – ют ачана хăйĕнни пек юратаканнине, хĕрарăм çине алă çĕклеменнине, çăварти çăкăра çурмалла пайлаканнине? Чӳречерен тинкерсе «ылтăн» упăшка кĕтсе ларнă хушăрах почтальон пенси килсе парас вăхăт та çитмĕ-ши?

**Елена НИКИФОРОВА.**
**/Ятне улăштарнă/.**
Канаш районĕ.

ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

*Лев МЕДВЕДЕВ*

## Чĕре ăшши сӳниччен

Вăхăт иртсен те сурать-çке туйăм
Кĕл чечеке аса илсен пĕрмай.
Çук ун патне текех ман туртăм –
Йĕппи каллех пултарĕ амантма.

Хитре чечек-çке, ӳпкелеймĕн.
Мăйран çакăнса ярать халтан.
Ун кăмăлне пĕлсе çитеймĕн,
Ăс çухатсан пĕрех хăртать шалтан.

Уйăх çеç сăнать ав юратуллăн
Каç сĕмĕ витĕр курăнса ирччен.
Тен, шанăça вăл чĕртĕ ăнăçуллăн
Хĕрӳ чĕре ăшши пач сӳниччен?

ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

**Эпĕ Саша ятлă, 39 çулта. Авланман, ялта аннепе пурăнатăп. Эпĕ 30-40 çулсенчи ырă кăмăллă, ялта пурăнма килĕшекен хĕр-хĕрарăмпа паллашасшăн. Ача пурри чăрмантармасть.**

**Телефон номерĕ: 89053423324.**

наркăмăш

АСА ИЛӲ

# Çарран

Эпир, вĕреннĕ çынсем, хамăрăн учительсене акăш та макăш мухтама юрататпăр. Ăслă та ырă кăмăллă вăл, ачасене хĕрхенме те пĕлет. Вĕсемшĕн чунне пама хатĕр. Тепĕр чухне учитель пирĕншĕн атте-аннерен те хаклăрах пек пулса тухать. Тĕрĕсех, çаплах пуль-ха вăл. Эпĕ хам та вĕрентекенре сахал мар ĕçлерĕм. Анчах учительсем те тĕрлĕрен пулаççĕçке.

Хама ăс панă лайăх вун-вун учителĕн хушаматне, ячĕпе ашшĕ ятне асăнма пултаратăп. Анчах япăхпа, нĕрсĕрлĕхпе асăма кĕрсе юлнисем те çук мар. Нумайăн мар вĕсем, çапах пур. Вĕсенчен пĕри – Федот Ситников. Вăл кӳршĕ ялти шкулта чăваш чĕлхипе литература вĕрентетчĕ. Манăн унпа вĕсен ялĕнчи шкула 5-мĕш класа çӳреме пуçличченех паллашма тӳр килчĕ.

Хамăр ялти пуçламăш шкулта 4-мĕш класран темиçе çул куçайман Коля Соколовпа вĕренмелле пулчĕ. Вăл питĕ шухă, итлемен ачаччĕ, йĕркеллĕ вулама-çырма та пĕлместчĕ. Учитель ăна манпа юнашар лартрĕ. Вăл вĕренӳ çулĕн тăршшĕпех çыру ĕçĕсене те, задачăсене те манран пăхса çырма хăнăхрĕ. Çапла унăн 5-мĕш класа куçма шанăç çуралчĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче пуçламăш шкултан вĕренсе тухакансен темиçе предметпа та çырса тата сăмахпа каласа экзамен тытмаллаччĕ. Çак тĕрĕслеве темшĕн экзамен мар, «испытани» тетчĕç. Пире чăваш чĕлхипе диктант çыртарчĕç. Çавăн чухне пирĕн класра Çĕнĕ Йĕлмери шкултан килнĕ Федот Герасимович та пулчĕ. Вăл пукан илсе тӳрех пирĕн парта умне ларчĕ, пĕр вĕçĕмсĕр: «Соколов, хăв çыр. Уткинран пăхса ан çыр!» – текелерĕ. Соколов диктант çыраймарĕ, 5-мĕш класа куçаймарĕ. Çав çулах шкула çӳреме пăрахрĕ.

Эпĕ пиллĕкмĕш уйăх ĕнтĕ Çĕнĕ Йĕлмери шкулта пиллĕкмĕш класра вĕренетĕп. Пире кашни предметпа тĕрлĕ учитель вĕрентет. Чăваш чĕлхипе литература учителĕ Федот Ситников ăс панинче мухтамалли нимех те çукчĕ. Уйрăмах тăван литературăна çиелтен кăна пĕлни палăратчĕ. Ас тăватăп: 1956 çулхи кĕркунне пирĕн ялта кашни килте радио ĕçлеме пуçларĕ. Тепĕр çулхине кăрлач уйăхĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарта чăваш писателĕ Илле Тукташ вилни çинчен радиопа ир-ирех пĕлтерчĕç. Çак хыпара илтнĕ-илтмен эпĕ шкула тухса чупрăм. Пĕрремĕш урок – чăваш литератури. Класа Федот Герасимович кĕчĕ. «Ачасем, ĕнер Шупашкарта Илле Тăхти писатель вилсе кайнă», – терĕ вăл хурлăхлăн. 5-мĕш класс ачи пулсан та Илле Тăхти 30-мĕш çулсен вĕçĕнчех вилни пирки лайăх пĕлеттĕм. Чĕнмесĕр ларнă тăк аванрах пулатчĕ-тĕр, эпĕ шарламасăр чăтаймарăм. «Ĕнер Шупашкарта Тăхти мар, Тукташ вилнĕ. Паян ирхине радиопа пĕлтерчĕç», – терĕм. Пирĕн вĕрентекен сасартăках класран тухса кайрĕ. Ахăртнех, учительсен пӳлĕмне кĕчĕ пулмалла, тепĕр самантран каялла таврăнчĕ. «Уткин тĕрĕс калать. Чăнах та, Тукташ çыравçă вилнĕ», – терĕ.

Çав кунран пуçласа Федот Герасимович мана юратми пулчĕ. Тулли шалу илес тесен учителĕн эрнере вун сакăр сехетрен кая мар ĕçлемеллеччĕ. Чăваш чĕлхипе литературин урокĕ яланах питĕ сахал пулнă. 12-13 сехетрен иртмен. Çавăнпа Федот Герасимовича алă ĕçĕн урокне панăччĕ. Çĕнĕ çултан пуçласа пире, 5-мĕш класс ачисене, вăл алă ĕçне «хăнăхтарчĕ». Шкулăн тĕп корпусĕнчен уйрăм ларакан пилĕк стеналлă çурт пурччĕ. Унăн пĕр пӳлĕмĕнче Мария Яковлевна кĕçĕн çулхи ачасене вĕрентетчĕ, тепринче йывăçран япаласем тума май паракан токарь станокĕсене вырнаçтарнăччĕ. Алă ĕçне хăнăхма эрнере икĕ сехет уйăрса панă пек ас тăватăп. Çав сехетсенче эпир, 10-12 çулсенчи ачасем, хăма тататтăмăр, сыпаттăмăр, якататтăмăр, кĕтес кăлараттăмăр, çилĕмпе çыпăçтарса чернил кĕленчине лартмалли тăваткалсем тăваттăмăр. Федот Герасимович каска пăчкине пĕр вĕçĕмсĕр хăйратчĕ. Пăчкăсене хăй пурăнакан урамри килсенчен пуçтарса шкула илсе пыратчĕ пулмалла. Çапла эпир çур çул аппалантăмăр. Эпĕ ал ĕçне хăнăхаймарăм. Ăсталанă япаласем манăн кăнттам, чалăш-тĕлĕш, тӳрем вырăна лартма май çук пулатчĕç. Класри çирĕм икĕ ачаран пур предметпа та чи лайăх ĕлкĕрсе пыракансkер ал ĕç тăвассипе чи начарри вырăнĕнче шутланма пуçларăм. Федот Герасимович манăн алă витĕр тухнă япалана тытатчĕ те урлă-тăрăх пăхма пуçлатчĕ, тутине чалăштаратчĕ, пĕр сăмах та каламастчĕ. Çу уйăхĕн вĕçĕнче чĕрĕк вĕçленчĕ. Федот Герасимович класри çирĕм пĕр ачана чи лайăх паллă лартрĕ. Манăн ĕçĕмсене «4» паллăпа хакларĕ. Вăл çак енĕпе тĕрĕс тунă тесе шухăшлатăп. Ĕмĕр тăршшĕпе те алă ĕçне хăнăхаймарăм. Çитмĕл çула çывхарса та паянхи кунччен сенĕкпе пуртă аври лартасси пулмарĕ.



Федот Герасимович манран çирĕм çул аслăччĕ, 1925 çулта çуралнăскерччĕ. Вăрçă вĕçленес умĕн ăна çара та илнĕ-мĕн. Çапăçусене хутшăнма тӳр килмен пулсан та ăна çар училищинче вĕренме телей пӳрнĕ, пакунĕ çине кĕçĕн лейтенант çăлтăрне лартнă. Суратра ăна çара каяс умĕнхи хатĕрленӳ предметне пачĕç. Çав уроксем 9-10-мĕш классенче кăна иртетчĕç. Эрнере икĕ сехет пулатчĕç.

Çу уйăхĕн вĕçĕ. Шăрăх кунсем çитрĕç. Манăн хулăн сукнаран çĕлетнĕ галифе, кирза атă тата симĕс çитсă кĕпе çеç. Вĕсем те кивĕ, кĕпе чавса тĕлĕнчен çĕтĕлнĕ. Тата виçĕ эрнерен вĕренӳ çулĕ вĕçленмелле. Пĕр ирхине, унчченхи кун ура питĕ тарланă пирки, манăн кирза атта тăхăнас килмерĕ. Унсăрăн галифене те тăхăнас çук. Манăн 8-мĕш класра çӳренĕ, унтанпа пĕчĕкленнĕ çăмăл шăлавар пурччĕ. Тăвăрланнă пулсан та çавнах тăхăнтăм. Урана аннен çăмăл пушмакĕ юрăхлă пулчĕ. Карас ал шăлли пусминчен çĕленĕ сумкăна илтĕм те çичĕ çухрăмри Сурата кайма çула тухрăм. Мана йăмăксенчен пĕри сăнаса тăнă-мĕн, аннене эпĕ унăн пушмакне тăхăнни çинчен çийĕнчех пĕлтернĕ. Çывăхри тăкăрлăка кĕнĕ тĕлте анне мана хăваласа çитрĕ, пушмакне хывса пама хушрĕ. Анне калани – саккун. Пушмака та, нускине те хывса патăм, çарран тăрса юлтăм. Мĕн вăл маншăн, вун тăватă çул тултарса вун пиллĕке кайнă ачашăн, çарран çӳресси?! Темиçе çул чупса хытарнă ура тупанĕ çемçелме шутламасть те-ха.

Шкула çарран пырса кĕрсе эпĕ вĕренекенсене тĕлĕнтертĕм. Çав кун çара кайма хатĕрленекенсен урокĕ те пулчĕ. Федот Герасимович суя винтовка йăттарса «ать-два» уттарчĕ, унталла-кунталла çаврăнмалли хушусем пачĕ. Пирĕн вун пилĕк вĕренекенлĕ класра арçын ачасем пурĕ те пиллĕкĕн çеçчĕ. Эпĕ, çара уреллă ача, хусканусене тĕрĕс мар тăватăпмĕн. Федот Герасимович питĕ кăра кăмăллă арçынччĕ. Мана, стройра пыракансkере, хыттăн кăшкăрчĕ. Çавăн хыççăн та хусканусене тĕрĕс тăваймарăм пулмалла. Учитель тата хытăрах çилленчĕ. Тепĕр самантран паха сăранран çĕленĕ /хром/ аттипе манăн çара ура çине пырса пусрĕ. Ыратнипе çĕре пĕтĕрĕнсе ӳкрĕм. Урараn юн юхма пуçларĕ. Ачасем мана çĕклесе тăратрĕç. Шикленсе ӳкнĕ Федот Герасимович урок вĕçленни çинчен пĕлтерчĕ.

Çывăх тусăм /парта хушшинче пĕрле ларattămăр/ хăйĕн сăмса тутрине çурса манăн урана çыхрĕ. Уксахласа килелле таплаттартăм. Тăпра-тусан таврашĕ суранланнă урана сиенлерĕ-тĕр, тепĕр ир тĕлнелле ура пирчерĕ, шыçрĕ. Эпĕ вунă куна яхăн шкула каяймарăм. Çакăн çинчен шкул директорне, яваплă ытти çынна евитленĕ пулсан Федот Герасимовичăн шара-пара тӳсмелле пулатчĕ-тĕр. Эпĕ никама та нимĕн те шарламарăм. Эрне çурăран ура тӳрленчĕ. Юлашки эрнере шкула галифепе, кирза атăпа çӳрерĕм.

11-мĕш класран лайăх вĕренсе тухрăм. «4» паллă нумай мар. Анчах хулари институтсене кайма та шанчăк çук. Çемье пысăк, пулăшу никамран та кĕтме çук. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче районсене пысăклатнăччĕ. Паçкак районне те пĕтерчĕç. Унти ялсене кĕпĕрне пек пысăк Сапаш районĕ çумне çыпăçтарчĕç. Вăл вăхăталла пирĕн Тĕкмере те сакăр çул вĕренмелли шкул уçăлнăччĕ ĕнтĕ. Директорта унта шăпах Федот Герасимович ĕçлетчĕ. Çĕнĕ çулччен пуçа ниçта чикме аптăранăскер колхозра тăрмашрăм. Раштав уйăхĕн вĕçнелле анне мана районти çут ĕç пайне кайса пăхма канаш пачĕ. «Район пысăк. Тен, ăçта та пулин учитель кирлĕ. Сана, вун пĕр çул вĕреннĕскере, ачасен çывăхне яма пултараççĕ», – терĕ. Кайрăм района, РОНО текен кантура кĕтĕм. Унăн пуçлăхĕ те вырăнтахчĕ. Вăл мана лайăх йышăнчĕ. «Хăвăр ялтах вырăн пур. Вырăс чĕлхи учителĕ офицера качча тухса аякри хулана куçрĕ. Унăн вырăнне вырнаçса çур çул ĕçлеме пултаратăн. Кайран специалист тупатпăр», – хыпарларĕ вăл, яла кайса директортан килĕшӳ илсе килме хушрĕ.

Каллех Федот Герасимович аллине кĕрсе ӳкетĕп иккен. Чун туртмасть, анчах мĕн тăвас тетĕн? 20-е çитсе пыратăп, атте-анне ĕнси çинче пурăнма май çук. Кайрăм шкула. Директор мана сӳрĕккĕн кĕтсе илчĕ. «Пире учитель кирлĕ мар», – терĕ Федот Герасимович. Урăх унăн манпа калаçас кăмăл пулмарĕ. Тепĕр кунхине каллех РОНОна çул тытрăм. «Пĕлетĕп. Укçашăн касăхаççĕ учительсем. Вырăс чĕлхин урокĕсене физиксемпе химиксене валеççе парать те директор ыйту ăнăçлă татăлнă тесе лĕх-лĕх кулать», – ман умра калама юраман сăмахсенех пĕлтерчĕ çут ĕç пайĕн пуçлăхĕ. Мана районăн тепĕр кĕтесĕнчи ялти шкула кайма сĕнчĕ, ача çуратма отпуск илнĕ учитель вырăнне кĕçĕн классемпе ĕçлеме сурaçтарчĕ.

Çул хыççăн çул иртрĕ. Çарта та пултăм, педагогика институтĕнчен те вĕренсе тухрăм. Шкулта вăтăр çул ĕçлерĕм. Федот Герасимовичпа юнашар тăрса тар тăкман паллах. Тĕрлĕ шкулта ĕçлемелле пулчĕ пирĕн. Çапах унăн сивлеклĕхĕ те, сӳрĕклĕхĕ те, чăртмахлăхĕ те чакмарĕ. Вăл манăн çара урана таптаса сусăрлатнине эпĕ те манаймарăм. Вăхăт иртнĕçемĕн унăн ĕçе пăрахма тиврĕ, темиçе çул учитель пулчĕ, унтан тивĕçлĕ канăва тухрĕ. Вунă çул каялла пирĕнтен яланлăхах уйрălса кайрĕ.

Манăн анне Федот Герасимовичран икĕ-виçĕ çул аслăрахчĕ. Вăл унран та ытларах, 86 çул тултариччен, пурăнчĕ. Анне виличчен темиçе çул маларах пулчĕ-ха ку. Иксĕмĕр калаçса ларattămăр. Ситникова та, вăл манăн урана таптанине те аса илтĕмĕр. «Ачам, эпĕ те сакăр вуннăран тахçанах иртрĕм, эсĕ те 63 тултартăн, пирĕн халĕ пĕр-пĕринчен вăтанмалли, пытармалли нимĕн те çук. Ситников пирки уçса пама йӳтемĕм пур», – терĕ вăл. Акă мĕн каласа кăтартрĕ анне.

Вăрçă вĕçленес умĕн икĕ çул маларах вĕсем Суратри вăтам шкулта пĕр класрах вĕреннĕ-мĕн. Анне Суратран виçĕ çухрăмри Анат Амалькассинчен шкула кашни кун çӳренĕ. Хветут хĕлле хваттерте пурăннă. Суратра аннен пĕрле вĕренекен хĕр тусĕ пулнă. Çавскерĕн госпитальре выртакан тетĕшне курма ашшĕпе амăшĕ Шупашкара кайнă-мĕн. Пике аннене хăйсен патне улаха илсе кĕнĕ. Кил хуçипе арăмĕ виçĕ-тăватă кунсăр та таврăнайман. Хветут Ситников кӳршĕллĕ килте хваттерте тăнă. 17-ри каччă Анат Амалькассин чипер хĕрĕ те çĕр каçнине пĕлсен хăйĕнпе пĕрле вĕренекен тантăшĕнчен улаха кĕртме тархасласа ыйтнă. Тантăшсем каччăна та çĕр каçма ирĕк панă.

Хветут Анат Амалькасси хĕрĕпе çывăхланасшăн: ăна чуп тума, ыталама, ачашлама, чăмăртама хăтланнă, вырăн çинче унпа юнашар выртасшăн тапаланнă. Пике парăнман, яша çупкă лектернĕ. Унтан тантăшĕпе иккĕшĕ йĕкĕте пӳртрен тĕртсе-хăваласа янă. «Ман тĕлĕшрен хускалнă çилли-пăшшине сӳнтерейменрĕ ĕнтĕ Хветут. Юнашар ялсенче пурăнтăмăр пулсан та ĕмĕрĕмре икĕ-виçĕ хутран ытла курман эпĕ ăна. Сана унпа тăтăш тĕл пулма тивнĕ ав. Мана пула çĕкленнĕ çилле сан çинче сӳнтерме хăтланнă вăл», – терĕ анне. Эпĕ нимĕн те чĕнмерĕм.

**Геннадий УТКИН.**

*Гульнур КУРБАНОВА, тутар çыравçи*

## Ют мар

Ют çĕр-шыв-и? Ют мар вăл,
ют мар,
/Каçарсамăр мана, тăвансемĕр/,
Хĕвелне, уйăхне пахалар –
Йăл кулаççĕ вĕсем килти евĕр.

Çыннисем те шăп çав çынсемех,
Адампа Ева ывăлĕ-хĕрĕ.
Тинĕс хумĕ те ман чун пекех:
Çĕкленӳллĕ, пăлхавăрлă, чĕрĕ.

Çыранти сăрчĕсем, тăвĕсем
Пирĕн халăхăн кăмăлĕ майлă:
Тĕл пулсан авалхи тăвансем
Йышăнаççĕ уявлăн, сăпайлăн.

Ку ют мечĕт тесе калама
Çакăнта ман чĕлхем çаврăнать-и?
Кашни кĕлĕ лăпкать чунăма,
Çупăрлать тейĕн чăнлăх çуначĕ...

Çавăнпа ют çĕр-шыв тенипе
Килĕшессĕм килмест. Çук,
ют мар-тăр,
Тунсăх туйăм киле чĕннипе
Кăмăла, тен, çапла палăртатпăр?

## Çурхи сунăм

Çурхи васкав хĕвĕшӳре
Темрен чун шикленет.
Çур хăватне туйса чĕре
Кăштах, тен, нишленет?

Мансам, мĕн ĕмĕрхи ĕçе,
Йăпăртлăха пушан,
Пăрах пĕр евĕр тивĕçе,
Чĕрĕлĕве халь шан.

Çĕн курăк ав тухать шăтса,
Тавралăх вăранать,
Вилес чĕре те вăй тупса
Хăлатăн ярăнать...

Курсам: пĕрремĕш аслати
Тăван çĕре сиплет,
Таçта тарать чир-чĕр ачи,
Таса вăй-хал килет.

Асамлă çакă çуркунне
Ман пĕр ыйту кăна:
Тархасшăн, ман ĕçӳсене –
Йăлт юлчăр ырана.

Тем тĕрлĕ çавăрать пуçа
Чарусăр самана.
Ху шăпупа ху пул хуçа,
Тата... ас ил мана.

Анчах... ăнланăн-ши çакна
Эс, пурнăç тимĕрçи?
Çапла сунаканни сана –
Вăл эп – аяк пĕрчи.

## Юлашки пан улми

Турат çинче – юлашки улма,
çĕр çинче – çĕнĕ юр.
Мĕншĕн ӳкмест юлашки улма?
Ӳкме вырăнĕ пур...

Çĕнĕ юр мамăк пек çемçе,
хĕр минтерĕ пекех.
Пулать çăлтăрсем çинчен
сикме чиперех.

Тен, хăрать вăл юр сиввинчен
е шăн çĕр хыттинчен?
...Сивлек çав тыткăнра виличчен,
тен, сӳнесшĕн пĕччен?..

**Тутарларан Юрий СЕМЕНТЕР куçарнă.**




АЛ ĂСТИ

# Лĕпĕшсем

**Халĕ пӳлĕме, чӳрече каррине илемлетмелли темĕн тĕрлĕ лĕпĕш те сутаççĕ. Тĕрĕссипе, вĕсене хăвăр та ăсталама пултаратăр. Ан ӳркенĕр çеç.**

Ĕç йĕрки йывăр мар. Ун валли пластик кĕленче, кантăк çине ӳкермелли контур, хут, кăранташ, сăрă, йăлтăртатакан хатĕр, хачă, хĕстермелли хатĕр кирлĕ. Пластик кĕленчен тăррине, тĕпне касмалла, хăвăра кирлĕ калăпăшлă тăваткал касса кăлармалла. Хут çине лĕпĕш ӳкермелле, ăна хĕстермелли хатĕрпе усă курса пластик тăваткал айне çирĕплетмелле. Лĕпĕше контурпа йĕрлемелле, вăл типсен касса кăлармалла, çуначĕсене кăшт çӳлелле авмалла. Лĕпĕше сăрăпа, йăлтăртатакан хатĕрпе илемлетмелле. Тепĕр тесен, ăна хăвăр кăмăлăра кура хитрелетме пултаратăр.



ШУТА ИЛĔР

# Хăçан акмалла?

**Нарăс, пуш уйăхĕсенчи тĕп тĕллев – пахча çимĕç калчине акасси. Ара, вĕсене йăран çине е парнике куçаричченкалчан ӳссе аталанмалла, çирĕп пулмалла-çке-ха. Çакнашкаллисем çеç тухăçĕпе савăнтарĕç. Чи малтанах мĕн шута илмелле? 2014 çулхи Уйăх календарьне пăхăнмалла. Аялти таблицăра пăрăçа, баклажана, помидора, хăяра хăçан акмаллине кăтартнă.**

Çакна та ан манăр: баклажан, пăрăç тухăçĕпе савăнтарччăр тесен вĕсене иртерех акмалла. Помидор пирки: чи малтан çӳллĕ ӳсекеннисене лартмалла, унтан – лутрисене. Иккĕмĕшĕсене пуш уйăхĕн вĕçĕнче поликарбонатран тунă теплицăна куçарма пулать.

Калчана чӳрече янахĕ çинче ӳстернĕ чухне хăш-пĕр саманта асра тытмалла. Ăна ытлашши шăвармалла мар, унсăрăн чир /черная ножка/ аталанма пултарĕ. Ăна пула ӳсен-тăран вилет. Çавăнпа калчана тăтăш, анчах кăштахшар шăвармалла. Калча тăсăлса ан кайтăр, йăран çине куçма хатĕр пултăр тесен пӳлĕмри çутă тĕлĕшпе асăрханмалла. Çутă сахал тăк ӳсен-тăран вăйсăрланать. Калча савăтне кăнтăр-хĕвел тухăç енне лартмалла. Пӳртри мĕн пур чӳрече çурçĕр енне тухать тĕк, хĕвел кĕмест пулсан калча патĕнче ирхине тата каçхине çутă çутмалла. Кун валли люминисцент лампа кирлĕ.

Помидор вăрри хăвăртрах шăттăр тесен мĕн тумалла? Ăна акас умĕн марганцовкăн çăра ирĕлчĕкне пĕр талăклăха ямалла, кун хыççăн ăшă шывра йĕпетнĕ пусма татăкĕ çине хумалла, çиелтен çавнашкаллипех витмелле. Вăрă шӳсен, сăмсалансан каçхине /виçĕ кун/ сивĕтмĕшĕн аялти çӳлĕкĕ çине хумалла, кăнтăрла пӳлĕмре тытмалла. Лутра ӳсекен, шултра çимĕç паракан помидор тĕсĕсем /теплицăра ӳстермеллисем/: Парадиз /1,2 метр çӳллĕш, кашни турат çинче 200 грамлă 6-8 помидор пулать/, Раджа /лутраскер, хăвăрт пиçет, çимĕçĕ тĕттĕм хĕрлĕ тĕслĕ, 300 грамм таран таять/, Эрмитаж /çурçĕр-хĕвел анăç регионĕсенче лайăх ӳсет, хăвăрт пиçет, çимĕçĕ 100 грамм таять/, Игранда тата Павловская роза /хăвăрт пиçет, çимĕç нумай парать, çанталăк улшăннине лайăх чăтса ирттерет/, Скороход /вĕтĕ çимĕçлĕ, 50 сантиметр çӳллĕш, тухăçĕ пысăк, ăна пăхма кăткăс мар/.

**Пахча çимĕç акмалли 2014 çулхи Уйăх календарĕ**

| Çимĕç ячĕ | нарăсри кунсем | пушри кунсем |
|---|---|---|
| Пăрăç | 5, 6, 16 | 4, 5, 9, 10 |
| Баклажан | 5, 6, 16 | 4, 5, 9, 10 |
| Помидор | 5, 6, 16 | 4, 5, 9, 10 |
| Шăркаланмасăр пулакан хăяр | 6, 7, 16 | 3, 6, 9, 10 |
| Купăста | 10, 16 | 9, 10 |

◆ТУТЛĂ ПĔÇЕРЕР-И?

## Хĕрлĕ пулăран – салат

**Тăварланă хĕрлĕ пулă – 200 грамм, Пекин купăсти, шурă сухари – 100 грамм, майонез кирлĕ.**

Пулла, купăстана çӳхен турамалла, пăтратмалла. Унтан майонез хушмалла, сухари ямалла.

## Пирожнăй

**Вĕтетнĕ печени – çур килограмм, 200 грамм услам çу, çавăн чухлех сахăр, 2-4 апат кашăкĕ какао, 150-200 миллилитр сĕт, ванилин, корица кирлĕ.**

Печение кухня комбайнĕпе вĕтетмелле, какао, ванилин, сахăр, корица ямалла, пăтратмалла. Услам çăва ирĕлтермелле, хутăша ямалла. Сĕте кăштах ăшăтмалла, печени хутăшĕ çине васкамасăр ямалла. Чустаран пирожнăй янтăламалла, сивĕтмĕше темиçе сехетлĕхе лартмалла.



## Çавăрмăш

**2 çăмарта, 1 стакан сахăр, çавăн чухлех йогурт, ванилин, 1 чей кашăкĕ апат соди, 1,5 стакан çăнăх, джем кирлĕ.**

Çăмартана сахăрпа, ванилинпа лăкамалла, йогурт /унта апат соди ямалла/ хушмалла. Унтан çăнăх ярса чуста çăрмалла – шĕвĕрех пулать. Противень çине ятарлă хут сармалла, чустана унта тăкмалла. Ăна духовкăна 7-8 минутлăха лартмалла. Икерче кăлармалла, хĕрелнĕ енĕпе нӳрĕ татăк çине хумалла, джем сĕрсе, çавăрмалла.

ХАЛĂХ МЕЛĔПЕ

# “Пыр хĕртет”

**Хăш чухне ĕçри столовăйра апатланма тивет. Кун хыççăн пыр хĕртнине туятăп. Çакă апат пахалăхĕпе çыхăннă ахăртнех. Анчах тĕрлĕ сăлтава пула пур чухне те килтен апат йăтса каяймастăп. Пыр хĕртнине халăх мелĕпе мĕнле иртермелле-ши?**

**Артем И.**
Патăрьел районĕ.

Столовăйра апат çинĕ хыççăн пыр хĕртет тĕк, паллах, унта çӳреме тăрăшмалла мар. Мĕнле çупа усă кураççĕ-ха унта? Пĕлейместĕн. Тен, çу тахçанхиех?

Пыр хĕртме тытăнсан чи малтанах активлă уголь ĕçсен аван. Ăна шывпа сыпмалла. Пурте пĕлеççĕ пулĕ: апат соди витĕмлĕ. 1 стакан шыва 1 чей кашăкĕ апат соди ямалла, ĕçмелле. Шĕвек тутлăрах пултăр тесен унта лимон сĕткенĕ /çур чей кашăкĕ/ яма юрать. Шыв пăшлатма тытăнсан – ĕçмелле. Миндаль – «тутлă» мел. Çак мăйăр хырăмлăхри йӳçеклĕхе йĕркелеме пулăшать. Ăна çийиччен вĕри шыва чиксе кăлармалла, хуппине сӳмелле. Миндале майĕпен, лайăх чăмламалла. Ĕнен е качакан тин сунă сĕчĕ – лайăх мел. Анчах кунта виçене пĕлмелле. Ытлашши нумай лактоза /вăл сĕтре пур/ хырăмлăхра газ кăларать, ыраттарать. Ку вара пыр хĕртнинчен пĕрре те кая мар. Виçене пăхăнмасан хырăмлăхри газа пĕтермелли мел шырама тивет. Аир – тутлах мар, анчах унăн витĕмĕ пысăк. Аирăн 1 чей кашăкĕ тымарне /ун вырăнне импĕрпе е тминпа усă курма юрать/ 4 чей кашăкĕ вĕтетнĕ пурăпа пăтратмалла. 1 чей кашăкĕ хутăша стаканăн 1/3 пайĕ чухлĕ ăшă шыва ямалла. Ăна апатланас умĕн 15 минут маларах кунне 3 хут ĕçмелле.

ПĔЛЕТĔР-И ЭСИР?

# Пальма çăвĕ сиенлĕ

**Пальма çăвĕпе кулинарире нумаях пулмасть усă курма тытăнчĕç. Кондитер çимĕçĕсем хатĕрлекенсемшĕн вăл меллĕ: çимĕç час пăсăлмасть. Анчах диетологсем чан çапаççĕ тесен те йăнăш мар: пальма çăвĕ тĕрĕслев витĕр тухман, вăл çын сывлăхне самаях сиен кӳрет.**

Лавккара сутăнакан чылай çимĕçре мĕн пуррине сăнасан çакă паллă: ытларахăшĕнче пальма çăвĕ. Çăратнă сĕт /сгущенка/, канфет, фри çĕр улми, шăккалат пасти, шăккалат, хăвăрт пиçекен лапша, чипс, сухари, крекер... Çавăн пекех ăна маргарина хушаççĕ. Хăйсен сывлăхне упрама тăрăшакансем çемçе маргарин вырăнне услам çу суйлаççĕ. Пĕр енчен, пальма çăвĕ çимĕçе ырă тутă кĕртет. Анчах унăн усăлăхĕ çакăнпа вĕçленет. Çуллă йӳçексем холестерин шайне ӳстереççĕ, атеросклероза, юн тымарĕсен тромбозне, чĕре чирĕсене аталантараççĕ. Ку пальма çăвне тӳрремĕнех пырса тивет. Çуллă йӳçексем пальма çăвĕсĕр пуçне какайра, чăх çăвĕнче, çăмартара, сĕт юр-варĕнче, услам çура, какао çура пур.

Пальма çăвĕ йӳнĕ, анчах сывлăхшăн сиенлĕ. Йӳнĕ апат-çимĕçе янисĕр пуçне ăна йӳнĕ косметикăна, крема яраççĕ. Парафин тутиллĕ писеве ас тăватăр-и? Çыпăçакан çак хутăш юн тымарне лекет. Пальма çăвĕ çимĕç тутине вăйлатать, çавна май ăна çиес те çиес килет. Ахальтен-им ача яшка вырăнне гамбургер е фри çĕр улми çиесшĕн? Пĕр çимĕçе тутанса пăхнă çын унсăр пурăнаймасть тесен те юрать. Пальма çăвĕпе промышленноçра металлурги хатĕр-хĕтĕрне сĕреççĕ. Тĕлĕнмелле-и? Ăна сĕт юр-варне те яраççĕ – ытларах упрантăр тесе. Кунашкаллисем хăвăрт ирĕлмеççĕ. Пальма çăвне ирĕлмешкĕн кирлĕ температура çыннăн ӳт температуринчен пысăкрах. Вăл хырăмлăха лексен лăймака хутăш евĕр юлать, стенкăсене çыпăçать. Ку пластилин çинипе пĕр пек мар-и?

Пальма çăвĕ – питĕ вăйлă канцероген. Аталаннă çĕр-шывсем хăйсем патне чикĕ леш енчен пальма çăвне апат-çимĕç хатĕрлес тĕлĕшпе кĕртмеççĕ. Çусен пахалăхне линоль йӳçекне кура кăтартаççĕ. Вăл ытларах тăк çимĕç пахарах. Ӳсен-тăран çăвĕнче ку кăтарту 70-75 процентпа танлашать, пальма çăвĕнче вара – 5 процент çеç. Пĕр сăмахпа, иккĕмĕшĕнче çын сывлăхĕшĕн усăллă пĕр япала та çук. Чи лайăххи – куккурус е олива çăвĕсем. Ӳсен-тăран çăвне вĕрилентермесен аванрах, ăна хатĕр çимĕçе ямалла. Пальма çăвĕн пĕртен пĕр лайăх енĕ – хакĕ. Анчах сăмах сывлăх пирки пынă чухне укçа перекетлесси çинчен шухăшламалла мар. Каярахпа ӳкĕнмелле пулĕ: чир-чĕр аталанĕ.

Пальма çăвĕпе ача-пăча апатланăвĕнче усă кураççĕ-и? Çакна иккĕленмесĕрех çирĕплетме пулать. Ĕне сĕчĕ амăшĕннинчен уйрăлса тăрать. Хăш чухне тĕрлĕ сăлтава пула амăшĕ кăкăр ĕмĕртеймест. Ятарлă хутăшпа усă курма тивет. Ăна туса кăларакан предприятисем вара ачана аллерги ан аптăраттăр тесе хутăша ӳсен-тăран çăвĕ яраççĕ: хĕвел çаврăнăш, куккурус, соя çăвĕсем. Çав шутра пальма çăвĕ те пур. Анчах, паллă ĕнтĕ, пальмитин йӳçекне /вăл пальма çăвĕнче пур/ ача организмĕ питĕ япăх йышăнать. Ку каллех çак япала пысăк температурăра çеç ирĕлнипе çыхăннă.

**Пальма çăвĕ организма сиен ан кӳтĕр тесен мĕн тумалла-ха? Паллах, çимĕçре вăл пур тăк ăна туянмалла мар.**

- **Чи малтанах этикеткăра мĕн çырнине вуламалла. Хăш чухне унта пальма çăвĕ пуррине кăтартаççĕ.**
- **«Ӳсен-тăран çăвĕсем» тесе çеç çырни те – сисчĕвленмелли сăлтав.**
- **Çимĕçсене ТУ-па мар, ГОСТ-па хатĕрленисене туянмалла.**
- **Нумай вăхăт упранма пултаракан кондитер çимĕçĕсене туянмалла мар.**
- **Фаст-фудсенчен пăрăнмалла – организмшăн питĕ сиенлĕ.**
- **Чи лайăххи – сĕт юр-варĕ. Ĕне усрамастăр тăк ăна лавккаран мар, ялти палланă çынсенчен туянмалла. Тортсемпе кукăльсене, пĕремĕк-печение килте пĕçернине нимĕн те çитмест.**

**Страницăна Ирина АЛЕКСЕЕВА хатĕрленĕ.**

# Сканворд




# Кулса вилмелле...

– Салам! Эсĕ мана ăçтан шăнкăравлатăн? Тем, номер курăнмасть...
– Домофонран шăнкăравлатăп! Алăка уç хăвăртрах, виçĕ сехет шăнса тăратăп ĕнтĕ!

* * *

Икĕ юлташ тĕл пулнă.
– Итле-ха, сан çине пысăк телей йăтăнса аннă терĕç. Эсĕ ăслă, питĕ илемлĕ хĕре качча илнĕ тет-и? – сăмах хушать пĕри.
– Кун пирки кам каларĕ?
– Арăму.

* * *

Упăшки арăмĕ патне шăнкăравлать:
– Чунăм, эпĕ паян киле таврăнмастăп. Ваçça патĕнче картла вылятпăр.
Арăмĕ чеен йăл кулать:
– Ваçук, илтрĕн-и? Вăл сан патра картла вылять.

* * *

Икĕ ача тавлашать.
– Эсĕ – Бемби, – тет пĕри.
– Мĕншĕн Бемби?
– Ну... Бемби – илемлĕн илтĕнет.




Пĕчĕк тăмсай пăлан – ун пекех мар...

* * *

Правительствăна панă ыйту: шăтăклă сыр рецепчĕпе мĕншĕн асфальт çул сарнă чухне усă кураççĕ?

* * *

– Принцесса, тен, паян каçхине сан патна кĕрес?
– Башньăра – дракон.
– Мĕн?
– Анне килте!

* * *

Хĕрарăм телефонпа шăнкăравлать:
– Алло, ку хĕрарăмсен консультацийĕ-и?
– Ăхă.
– Тормоз пускăчĕ сылтăм е сулахай енче?

* * *

Арçын хупаха кĕрет:
– Мана, тархасшăн, чивирзднеркильмаскишбрунгальдмеркпа лимон парăр.
Бармен:
– Чивирзднеркильмаскишбрунгальдмеркпа мĕн?

* * *

Арăмĕ корпоративран таврăнать.
– Чунăм, ан кăшкăр. Пĕтĕмпех тĕрĕссине калатăп: пурте эрех ĕçрĕç, эпĕ ĕçмерĕм, пурте арçынсене чуп турĕç, эпĕ чуп тумарăм. Салат çирĕм, ташларăм, конкурссене хутшăнтăм. Çăкă çеç. Санăн арăму питĕ ăслă. Ыйтусем татах пур-и?




– Кĕпÿ ăçта?

* * *

– Ман çине ан кăшкăр, унсăрăн чирлесе ÿкĕн!
– Мĕнпе?
– Янах шăмми хуçăлнипе, пуç мими чĕтреннипе.

* * *

Раççейри клубсен алăкĕ патĕнче çеç икĕ видеокамера вырнаçтараççĕ. Пĕрремĕшĕ çынсене сыхлать, иккĕмĕшĕ пĕрремĕш камерăна вăрласран асăрхать.

* * *

Енчĕке, ылтăн шăлсене çухатрăр-и? Эппин, эсир чикана чуп тунă.

* * *

– Эх, чун ыратать...
– Ăна сиплетĕн-и?
– Чуна сипленĕ чухне пĕвер ыратать.

* * *

Хĕрсем калаçаççĕ:
– Эсир пĕлетĕр-и? 1976 çулхи çĕртмен 18-мĕшĕнче 27-ри Алла Пугачевăн упăшки çуралнă.

## Иртнĕ номерти сканворд хуравĕсем

*СЫЛТĂМАЛЛА: Никифор – Сахаров – Шопен – Лиана – салма – мăян – тикĕт – пĕлĕт – Анфиса – анод – тăмана – Рекс – упăшки – лимон – сурăх – теннис – "Аватар" – артист – Хваста – Муром – Юрату – "Маг" – риза – Айрат – акаци – спонсор.*

*АЯЛАЛЛА: купăста – факел – "Руслан" – Сăпани – хушамат – океан – Шекспир – Элĕк – "Мадонна" – ярмăркка – трап – каяш – тăри – намăс – нухрат – Ерне – слон – ăрат – квас – Сурхури – тăрна – нимĕр – иврит – "Вьюга" – трава – радио – тăвар – "Эмма" – Стас.*

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÜСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер, доставка – бесплатно. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибро-прессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 8-962-598-96-86.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** – диам. 1,5м; 1м; 0,7м; 0,8м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ** – пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-903-065-99-09.